24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ФЕВРАЛЬ
6
КĔÇНЕРНИКУН
30 (5745) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

АГИТАЦИ ĔÇНЕ ПРОИЗВОДСТВО ЫЙТĂВĔСЕМПЕ ТАЧĂ ÇЫХĂНТАРМАЛЛА

Ленин—Сталин партийĕ политикăллă агитаци ĕçне пысăккăн хаклать. Лайăх йĕркеленĕ большевикла агитаци партипе правительство лартнă задачăсене ăнăçлăн татса парас çĕрте пысăк вăй пулса тăрать. Çавăнпа та ĕççыннисем хушшинче политикăллă агитацине йĕркеллĕ, куллен туса пымалла тата ăна производствăллă ыйтусемпе çыхăнтармалла. Çавăн пек чухне кăна агитаци усă пама пултарать. Агитаци—хисеплĕ ĕç, вăл хăйне майлă искусство. Ĕççыннисене партипе правительство лартнă задачăсене пурнăçа кĕртсе пыма мобилизацилесси — агитаторсен кулленхи ĕçĕ, парти шанса панă ответлă та пархатарлă ĕçĕ пулса тăрать.

Агитаторсем сине пирĕн ĕççыннисем пысăк шанăç хураççĕ, вĕсем агитаторсене юратаççĕ. Мĕншĕн тесен агитаторсем чи малтан хăйсен çулăмлă сăмахĕсемпе тĕрлĕрен ыйтусене ăнлантарса параççĕ, вĕсем партипе правительствăн решенийĕсене ĕççыннисем патне ситереççĕ. Çавăнпа агитаторсен пĕлӳлĕх енĕпе те, ĕçре те малта пымалла, ыттисене пример кăтартмалла.

Агитаторăн стахановецсен чаплă опычĕсене сарма тăрăшмалла, лодырьсене, рвачсене, дезорганизаторсене хирĕç кĕрешмелле, ĕççыннисене тухăçлă ĕçлеме тата ĕçе юратма вĕрентмелле. Парторганизацисен задачи — политикăллă агитацине куллен, конкретлă ертсе пырасси, агитаторсене ĕçре пулăшасси.

Халĕ пирĕн республикăра уйрăм округсем тăрăх суйлав кампанийĕ сарăлса пырать. Республикăри рабочисен, колхозниксен тата интеллигенцин политикăллă, çавăн пекех производствăллă çĕкленĕвĕ вăйлăн ӳсрĕ. Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, чаплă примерсем кăтартса ĕçлекенсен хисепĕ ӳсет. Агитаторсен умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ: вĕсен коммунистсемпе беспартийнăйсен блокĕн кандидачĕсемшĕн, партконференцине паха çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн агитацилемелле. Халĕ ялта, колхозра, предприятисенче, учрежденисенче политикăллă агитаци нихăçанхи пек мар вăйлăн сарăлса пымалла. Политикăллă агитаци ĕçне предприятисенче производствăллă программăна тултарас, продукци пахалăхне лайăхлатас, ĕç дисциплинине çирĕплетес тата колхозсенче çуракине кăтартуллăн хатĕрленес ыйтусемпе çыхăнтарса пымалла.

Агитаци ĕçĕ витĕмлĕ пултăр тесен, парторганизацисен тата агитколлективсен хăйсем ертсе пыракан предприятин, колхозăн ĕçне, вĕсенче ĕçлекен рабочисемпе колхозниксен пурнăçĕпе ĕçĕсене пĕлмелле. Уйрăм предприятисемпе уйрăм стахановецсен ĕçĕ тăрăх, ĕççыннисене партипе правительство ыйтăннă решенисене пурнăçлама хăнăхтармалла. Политикăллă агитацин хальхи вăхăтри ĕçĕ — предприятисемпе колхозсене тата рабочисемпе колхозниксене илнĕ обязательствăсене тултарассишĕн кĕрешĕве активлăн хутшăнтарасси. Кашни предприяти, учреждени, колхоз тата бригада Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине, çавнашкалах уйрăм округсем тăрăх пулакан суйлавсен кунне производствăллă çĕнĕ парнесемпе кĕтсе илтĕр.

Вăрмарти спортинвентарьсем тăвакан фабрикăри пуçламăш парторганизаци юлашки вăхăтра политикăллă агитацине фабрикăн производствăллă ыйтăвĕсемпе таччăн çыхăнтарса пырать. Чĕртавара тирпейлĕ тытас, цехсене культурăллă тăвас, инструментсене йĕркеллĕ тыткалас тĕлĕшпе агитаторсем рабочисене каласа ăнлантараççĕ. Çавнашкал ыйтусем тăрăх калаçусем ирттерни рабочисене интереслентерет. Калаçу ирттернĕ чухне рабочисем фабрика ĕçне лайăхлатмалли паха сĕнӳсем параççĕ.

Етĕрнери çу заводĕнчи пуçламăш парторганизаци те агитаци ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Халĕ ĕнтĕ агитаторсем калаçусене пĕтĕмĕшле ыйтусем тăрăх мар, заводăн производство ыйтăвĕсем тăрăх туса ирттереççĕ. Завод январь уйăхĕнчи плана ытлашшипех тултарнă. Февралĕн 15-мĕшне—Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци уçăлнă тĕле — çак уйăхăн планне тултарассишĕн кĕрешет.

Вăрнар районĕнчи Булатовăри Молотов ячĕпе тăракан колхозра пĕрлешӳхăнса радио итлесси, хаçат-журналсем вуласси, тĕрлĕ ыйтусем тăрăх калаçусем ирттересси йăлана кĕнĕ. Çак ĕçе агитколлектив пуçарса, ертсе пырать. Калас пулать, Вăрнар районĕнчи ытти хăшпĕр колхозсенче те политикăллă агитаци ĕçĕ начар мар. Ку вăл ВКП(б) райкомĕ тата пуçламăш парторганизацисем агитаци ĕçне лайăх ертсе пынинчен, агитаторсене воспитани парса пынинчен килет.

ВКП(б) Обкомĕн V пленумĕ Канаш тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенче пропагандăпа агитаци ĕçĕ мĕнле тăни çинчен сӳтсе-явса, вăл районсенче çак ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ хăйĕн решенинче агитаци ĕçĕнче формализм пуррине, ăна пĕтĕмĕшле туса пынине, предприятин, колхозăн пурнăçĕпе таччăн çыхăнтарса пыманнине кăтартрĕ. Асăннă районсенче, çавăн пекех ытти районсенче те, ВКП(б) райкомĕсемпе пуçламăш парторганизацисем агитколлективсем миçе доклад тата калаçу ирттернине шута илсе кăна ларнă. Политикăллă агитаци ĕçĕ мĕнле пулса пыни çинчен сăмах пуçарсан, ВКП(б) райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсем час-часах: пирĕн районра çавăн чухлĕ агитколлектив, вĕсенче çавăн чухлĕ агитатор, агитаторсем çавăн чухлĕ доклад, калаçу, лекци ирттернĕ, çавăн чухлĕ стена хаçачĕ кăларнă, тесе пĕлтереççĕ. Анчах агитацин содержанине, пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ.

Парти, совет, хуçалăх организацисен руководителĕсен хăйсен агитаторсем пулмалла. Руководительсем хăйсем агитаци ĕçне хутшăнса ĕçлени пĕтĕм агитаторсен ĕçне вăйлатма пулăшать. Çапла пулин те райком секретарĕсем, отдел заведующисем, райсовет исполкомĕсен председателĕсем колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕсенче докладсем сахал тăваççĕ.

Агитаторсем сине пысăк ĕç хунă. Вĕсен большевикла çивĕч сăмахсене ĕççыннисем патне çитермелле. Агитаторсен хăйсен те большевизма сине тăрса вĕренмелле. Парти райкомĕсен агитаторсене тĕрĕс суйласа илмелле, вĕсене ĕçре çитĕнтермелле тата кулленхи практикăллă ĕçре пулăшса пымалла.

1941 çулта кашни предприятин, колхозăн иртнĕ çулхинчен тухăçлăрах тата лайăхрах ĕçлемелле. Сталинла виççĕмĕш пятилеткăн тăваттăмĕш çулĕн программине ăнăçлăн тултармалла. Çак задачăна татса панă çĕрте, организацияллĕ ĕçсене вăйлатнипе пĕрлех, халăх хушшинче массăллă-политикăллă агитацине вăйлатни те пысăк вырăнта тăрать. Парторганизацисен политикăллă агитацие ертсе пыраççĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Минскри М. И. Калинин ячĕпе тăракан пехота училищине Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Минскри М. И. Калинин ячĕпе тăракан пехота училищи 20 çул тултарнине паллă тăвас шутпа тата Хĕрлĕ Çăран командний кадрĕсене хатĕрлес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн училищене **Хĕрлĕ Ялав орденĕпе** наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти февралĕн 4-мĕш.

Минскри М. И. Калинин ячĕпе тăракан пехота училищин начальствующий составне СССР Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăлани

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти февралĕн 4-мĕшĕнче кăларнă Указпа — Минскри М. И. Калинин ячĕпе тăракан пехота училищи 20 çул тултарнă май, боевой хатĕрленӳпе политикăллă хатĕрленӳ ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн тата командний кадрсене воспитани парса ӳстерес тĕлĕшпе тухăçлăн ĕçлесе пынăшăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе 4 çынна, «Знак Почета» орденĕпе—5 çынна, «За трудовое отличие» медальпе — 4 çынна наградăланă. (ТАСС).

К. Е. Ворошилов юлташ патне янă саламсем

Совет Союзĕн маршалĕ К. Е. Ворошилов юлташ утмăл çул тултарнă май унăн ячĕпе нумай саламсем килеççĕ. Саламсем çаксенчен килнĕ: ĕççынни депутачĕсен Мускав Советĕнчен, СССР тата РСФСР Ссоавиахим Центральный Совечĕн Президиумĕнчен, СССР совет писателĕсен Союзĕн Президиумĕнчен, Мускав Çар Округ войскисен командующинчен, ССР Союзĕн Судостроительнăй Промышленность Халăх Комиссариачĕн Коллегийĕнчен, Авиаци Промышленноçĕн Халăх Комиссариатĕнчен, ССР Союзĕн Вооружени Халăх Комиссариачĕн Коллегийĕнчен, Казахстанри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитетĕнчен т. ыттисенчен те. (ТАСС).

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕнчен

Хаклă Климент Ефремович!

Эсир утмăл çул тултарнă кун СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Сире — большевикла партин шанчăклă ленине, Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешекен çирĕп борца саламлать.

Хăвăрăн ăнлануллă пĕтĕм пурнăçа Эсир рабочи класс ĕçĕшĕн, коммунизм ĕçĕшĕн панă. Вырăссен пĕрремĕш революцийĕн çулĕсенче, Ленинпа тата Сталин юлташпа алла-алăн тытăнса, пытанса ĕçленĕ чухне Эсир большевикла организацисене туса йĕркелесе пынă, Луганскри пролетарисен стачкăллă кĕрешӳне, боевой организацийĕсене ертсе пынă. Рабочи класс диктатуришĕн, ленинизм çĕнтерĕвĕшĕн пынă кĕрешӳре Сирĕн чăтăмлăхпа энергине патша тĕрмисем те, ссылкăсем те хавшатма пултарайман.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци кунĕсенче Эсир — Ленинпа Сталинăн сывăх соратникĕ — рабочисемпе хресченсен çĕнтерӳллĕ хĕçпăшаллă восстанине организацилекенченчен пĕри пулнă.

Граждăн вăрçинпе интервенци çулĕсенче Эсир Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă та паттăр Хĕрлĕ Çарне, вăл контрреволюцине çĕмĕрсе тăкас ĕçре гунă геройла çĕнтерӳсене организацинленĕ çынсенчен пĕри пулса тăнă. Сталин юлташпа пĕрле, тӳррĕмех вăл ертсе пынипе, Эсир Царицына паттăрăн хӳтĕлесе хăварас ĕçе — граждăн вăрçин историне чи чаплă страницăсенчен пĕри пулса кĕнĕ ĕçе организацинленĕ.

Деникина, белополяксене тата Врангеле хирĕç пынă кĕрешӳре ĕмĕр сӳнми мухтава тухнă. Пĕрремĕш Утлă Çар организаторĕ тата политикăллă руководителĕ пулса ĕçлесе, Эсир тунă питех те пысăк тава тивĕçлĕ ĕçсене ĕççыннисем лайăх пĕлеççĕ.

Сирĕн мухтавлă ятра, пĕтĕм совет халăхĕ юратакан пролетариллĕ полководецăн ятĕнче пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем чаплă паттăрлăха, геройлăха тата Хĕрлĕ Çар Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕпе Совет государствине пĕтĕм чĕререн парăнса юратнине кураççĕ.

Кучухнехи техникăпа хĕçпăалланнă, идея енчен тачă пĕтĕçсе тăракан Хĕрлĕ Çар ССР Союзĕн мĕнпур тăшманĕсемшĕн хăрушă вăй пулса тăчĕ. Çакăншăн вăл Эсир социализмлă государствăн хĕçпăаллă вăйĕсене организацилес тата ертсе пырас тĕлĕшпе гунă ĕçе, Сире нумай тав тума тивĕçлĕ.

Сирĕн пример тăрăх Совет Союзĕнчи ĕççыннисем партин генеральнăй линине пĕр пăркаланмасăр çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыма, халăх тăшманĕсемпе нихăçан та килĕшмен çын пулма, парти лартнă задачăсене пурнăçа кĕртес ĕçре большевикла çине тăрса кĕрешекен çын пулма вĕренеççĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ Сире хамăрăн социализмлă тăван çĕршыври ĕççыннисен ырлăхĕпе телейĕшĕн нумай, нумай çулсем хушши тухăçлăн ĕçлесе пурăнма сунатпăр!

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр Совет Союзĕн Маршалĕ Ворошилов юлташ!

Сывă пултăр Ленин — Сталин партийĕ тата унăн аслă çулпуçĕ Сталин юлташ!

Кузнецов, Исаков, Рогов, Галлер, Левченко, Игнатьев, Юмашев, Трибуц, Октябрьский, Головко, Абанькин, Жаворонков, Мушнов, Захаров, Кулаков, Яковенко, Воробьев, Алафузов.

ВКП(б) Мускав Область тата Хула Комитечĕсем К. Е. Ворошилов юлташа

ХАКЛĂ КЛИМЕНТ ЕФРЕМОВИЧ!

Эсир утмăл çул тултарнă кун ВКП(б) Мускав Область тата Хула Комитечĕсем Сире — Ленинпа Сталинăн шанчăклă соратникне, коммунистсен партин чи активлă строителĕсенчен пĕрине, хамăрăн тăван çĕршывăн мухтавлă ывăлне — большевикла хĕрӳллĕ салам ярасçĕ!

Сирĕн ят, Климент Ефремович, рабочи класăн 1905 çулти гэройла кĕрешĕвĕпе, партин Октябрьти Социализмлă Аслă революцие хатĕрленĕ чухнехи тата çак революцие туса ирттернĕ чухнехи кĕрешĕвĕпе, Хĕрлĕ Çăран чаплă çĕнтерĕвĕсемпе çыхăнса тăрать.

Эсир, 17 çулхи çамрăк çын пулнă чухнех малта пыракансен — рабочи класпа мĕнпур ĕççыннисенз ирĕке кăларассишĕн кĕрешекенсен ретне кĕрсе, çамрăклăх революциллĕ ĕçе тытăннă.

Луганскри рабочисен стачкисемпе боевой отрячĕсене ертсе пыни, тĕрлĕрен пролетариллĕ центрсенче партиллĕ ĕçе вăя хурса туса пыни, патша правительстви пĕрмаях хĕсĕрленни, тĕрмесемпе ссылкăсем, Октябрьти Социализмлă Аслă революци кунĕсенче хĕрӳллĕ ĕçлени, партин тата халăхăн пĕтĕм тăшманĕсене хирĕç хăюллăн тата хăватлăн кĕресше пыни — çакăн пек Эсир утса тухнă мухтавлă çул.

Украинăри рабочисен отрячĕсем Царицын патне тухнă чухнехи геройла походра тата çав пит паха стратегиллĕ центра хӳтĕленĕ чухне, Пĕрремĕш Утлă Çăран легендарнăй похочĕсенче, хамăрăн тăван çĕршывăн чиккисене сыхлассишĕн кĕрешнĕ çĕрте тата унăн хĕçпăаллă вăйĕсен строительствинче Эсир хăвăр Хĕрлĕ Çăран паллăран та паллă полководецĕ пулнинз кăтартса патăр.

Большевиксен партийĕ тата Сталин юлташ ертсе пынипе Эсир, социализм çĕршывĕн хĕçпăаллă вăйĕсен чи паллă организаторĕ, хамăрăн Хĕрлĕ Çара тĕреклетсе пытăр тата ССР Союзĕн оборона хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр малалла ĕçлесе пыратăр.

Хăвăр утмăл çул тултарнă куна Эсир, хаклă Климент Ефрэмович, вăйпитти çын пулнипе, хăвăрăн творчествăллă ĕç сарăлса ӳссе кайнипе çитĕрĕр.

Хамăрăн пĕтĕм партипе пĕрле, Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхсемпе пĕрле, Мускаври большевиксем, Мускав хулинче Мускав облаçĕнчи мĕнпур ĕççыннисем Сире тата нумай çулсем хушши сывлăхлă пулма, тухăçлă ĕçре, коммунизмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсемшĕн пыракан кĕрешӳре иксĕлмен вăй-хăватлă пулма ырă сунаççĕ.

ВКП(б) Мускав Область тата Хула Комитечĕсем.

Климент Ефремович Ворошилов юлташа

ХАКЛĂ КЛИМЕНТ ЕФРЕМОВИЧ!

ВКП(б) Ленинград область тата Хула Комитечĕсем Ленинград облаçĕнчи большевиксемпе мĕнпур ĕççыннисен ячĕпе Сире, Эсир утмăл çул тултарнă кун, хĕрӳллĕ салам ярасçĕ тата ырлăхпа сывлăх сунаççĕ.

Сирĕн ят, Климент Ефремович, революциллĕ пысăк деятелĕн, большевиксен партин паллă строителĕн, халăхăн телейĕшĕн хăватлăн кĕресше пыракан ячĕ, ĕççыннисемшĕн вĕçĕмсĕр хаклă та сывăх.

Эсир яланах аслă Ленинпа Сталинăн шанчăклă ученикĕ тата соратникĕ пулнă, халĕ те çавăн пекех пулса тăратăр.

Кадровăй пролетарий, стачкăллă кĕрешĕвĕн организаторĕ, виçĕ революцин активлă участникĕ — çакăн пек ĕнтĕ социализмлă революци çĕнтерĕвĕшĕн пынă кĕрешӳри Сирĕн çул.

Совет Российĕнчи халăхсем интервентсемпе белогвардеецсене хирĕç тăван çĕршывшăн кĕрешнĕ вăрçă çулĕсенче, Эсир, революци çулпуçĕсемпе Ленинпа тата Сталинпа пĕрле, вĕсем ертсе пынипе, Хĕрлĕ Çăран организаторĕсенчен пĕри, унăн чи мухтавлă та чаплă полководецĕсенчен пĕри пултăр.

Пролетариатăн геннллĕ стратегĕпе аслă Сталинпа пĕрле тата вăл ертсе пынипе, Эсир Царицын оборонине организацилерĕр, хăвăрăн примерпа çамрăк Хĕрлĕ Çăран боецĕсемпе командирĕсене чаплă та паттăр ĕçсем тума хавхалантарса пытăр. Сталин юлташпа пĕрле, Эсир кĕрешӳре мухтавлăхпа витĕннĕ геройла Пĕрремĕш Утлă Çăран организаторĕсенчен тата руководителĕсенчен пĕри пултăр. Деникинецсене, белополяксене тата врангелевецсене хирĕç пынă çапăçусенче Эсир Пĕрремĕш Утлă Çăран полкĕсене ертсе пытăр тата çав çапăçусенче тăшмайсене çĕнтерсе пытăр.

Граждăн вăрçи вĕçленнĕ хыççăн Эсир социализм çĕршывĕн хĕçпăаллă вăйĕсен кĕрешĕвĕри хатĕрлĕхне тĕреклетес тĕлĕшпе пысăк ĕçе тухăçлăн туса ирттертĕр. Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче, партипе правительство пĕрмаях тăрăшнипе, Эсир ывăнма пĕлмесĕр, ĕçлесе пынипе, пирĕн çĕршывăн хĕçпăаллăха вăйĕсем чи лайăх çар техникипе хĕçпăалланчĕç. Çак çулсенче боецсен, командирсен тата политработниксен ырă та чаплă, хамăрăн тăван çĕршывăн пĕтĕм чĕререн тăракан, вăрçă искусствине тĕплĕн вĕренсе алла илсе пыракан кадрĕсем ӳссе çитĕнчĕç.

Совет Союзĕн хĕçпăаллă вăйĕсем, граждан вăрçин геройла традицийĕсем тăрăх пăхса ӳстернĕскерсем, совет çĕршывĕн чиккисен хăрушсăрлăхне сыхласа, партипе правительство хушнисене ворошиловла пурнăçа кĕртсе, тăшмансене пĕр хут кăна мар çĕмĕрчĕç.

Паянхи кун та, тĕнчери империализмлă вăрçă обстановкинче, Эсир социализм çĕршывĕн оборона хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе государствăн пит пысăк ĕçне туса пыратăр.

Эсир утмăл çул тултарнă кун Сире саламласа, эпир, ленинградецсем, пирĕн хулан революциллĕ кĕрешĕвне хутшăнса. Эсир тунă ĕçсене уйрăмах палăртатпăр. 1917 çулти февральте Эсир Петроград гарнизонне царизма сирпĕнтерее антарма çĕкленĕ. Совет власăн пирвайхи кунĕсенче, «Красный градоначальник» вырăнĕнче ĕçлесе, Эсир Петрограда — пролетариллĕ революцин сăпкине сыхлассине организацинленĕ, ВЧК организацилес çĕре тата унăн ĕçне активлă хутшăннă. Партин X-мĕш съезчĕ хушнине пурнăçа кĕртсе, Эсир Кронштадтри пăлхава, Петрограда хăратса тăнă пăлхава пусарас ĕçе ертсе пынă. ВКП(б) Центральный Комитечĕн ытти членĕсемпе пĕрле, Эсир Ленинградри большевиксене контрреволюциллĕ зиновьевщинăна тăрă шыв çине кăларма тата çĕмĕрсе тăкма пулăшнă.

Партин Центральный Комитечĕ, Сталин юлташ тата Совет правительстви Ленинградри ĕççыннисемшĕн тăрăшнине палăртса, Эсир яланах пирĕн хулапа таччăн çыхăнса тăнă, унăн хăрушсăрлăхĕшĕн тата вăл чечекленсе ӳссе пытăр тесе тăрăшнă тата халĕ те тăрăшатăр.

Пирĕн партипе совет государствин мухтавлă руководителĕсен когортинче тăрса, аслă Сталинăн чи сывăх соратникĕсенчен пĕри пулса, Эсир хăвăрăн мĕнпур вăя, пĕлӳре тата хăвата коммунизмлă общество тăвас историллĕ задачăна пурнăçа кĕртес çĕре патăр.

Паян, Эсир утмăл çул тултарнă кун, эпир Сире, Хаклă Климент Ефремович, Эсир коммунизмшăн тăвакан кирлă ĕçсене малалла туса пымашкăн сывлăхлă пулма кирлă сунатпăр.

ВКП(б) Ленинград Область тата Хула Комитечĕсем.

Ленинпа Сталинăн шанчăклă соратникне Климент Ефремович Ворошилов юлташа

Эсир çуралнăранпа 60 çул тултарнă кун Эстонири большевиксен Коммунистла Партийĕн Центральный Комитечĕ Советлă Эстонири партире тăракан тата партире тăман мĕнпур большевиксен ячĕпе Сире, Климент Ефремович, хĕрӳллĕн саламлать.

Сирĕн пĕтĕм пурнăç вăл — геройла революциллĕ кĕрешӳ, унăн примерĕсем тăрăх ССР Союзĕнчи çамрăк граждăнсем совет патриотизмĕн туйăмĕпе, Ленин—Сталин ĕçне вĕçĕ-хĕррисĕр парăннин туйăмĕпе воспитани илсе пыраççĕ.

Сире, Климент Ефремович, Советсен çĕршывĕнчи ĕççыннисен ырлăхĕпе телейĕшĕн нумай, нумай çулсем хушши сывлăхлă пулса пурăнма, малашне те тухăçлăн ĕçлесе пыма сунатпăр.

Сывă пултăр Ленинпа Сталинăн шанчăклă соратникĕ — Климент Ефремович Ворошилов!

Сывă пултăр аслă Сталин!

Эстонири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ.

Климент Ефремович Ворошилов юлташа

ХАКЛĂ КЛИМЕНТ ЕФРЕМОВИЧ!

Эсир утмăл çул тултарнă кун Украинăри Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечĕпе УССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сире, большевиксен партин чи активлă строителĕсенчен пĕрине, Ленинпа Сталинăн шанчăклă ученикне тата соратникне, большевикла хĕрӳллĕ салам ярасçĕ.

Эсир хăватлă Хĕрлĕ Çăран тата унăн мухтавлă отрячĕн — Пĕрремĕш Утлă Çăран пирвайхи организаторĕсенчен пĕри пулнă. V-мĕш Украински армипе унăн боевой полкĕсен революциллĕ паттăр ĕçĕсем çинчен сарăлнă чап нихăçан та сӳнес çук, ку çăран полкĕсем Эсир, Климент Ефремович, ертсе пынипе 1918 çулта Украинăран Царицын патне геройла поход тунă.

Дон бассейнĕнчи рабочи класа тата пĕтĕм Украинăри ĕççыннисене царизма хирĕç, Октябрьти Социализмлă Аслă революцин çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме организацилесе тата пĕтĕçтерсе пынипе Эсир тунă тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсене Украинăри большевиксем, Украинăри пĕтĕм халăх пит те паха на хурса хаклаççĕ.

Эсир Ленин — Сталин ĕçĕшĕн çирĕппĕн тăни, хурçă пек çирĕп хăватлă мухтава тухнă Пĕрремĕш Утлă Çар организаторĕ тата политикăллă руководителĕ пулса ĕçлесе, Эсир тунă питех те пысăк тава тивĕçлĕ ĕçсене ĕççыннисем лайăх пĕлеççĕ.

Сирĕн пример тăрăх Совет Союзĕнчи ĕççыннисем партин генеральнăй линине пĕр пăркаланмасăр çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыма, халăх тăшманĕсемпе нихăçан та килĕшмен çын пулма, парти лартнă задачăсене пурнăçа кĕртес ĕçре большевикла çине тăрса кĕрешекен çын пулма вĕренеççĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ Сире хамăрăн социализмлă тăван çĕршыври ĕççыннисен ырлăхĕпе телейĕшĕн нумай, нумай çулсем хушши тухăçлăн ĕçлесе пурăнма сунатпăр!

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр Совет Союзĕн Маршалĕ Ворошилов юлташ!

Сывă пултăр Ленин — Сталин партийĕ тата унăн аслă çулпуçĕ Сталин юлташ!

Украинăри Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечĕ.

УССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.

Ворошилов юлташ çинчен калаçу ирттерчĕç

ЕЛЧĔК, февралĕн 4-мĕш. (Телефонпа). Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем валли Совет Союзĕн Маршалĕ Климент Ефремович Ворошилов çуралнăранпа утмăл çул тултарни çинчен калаçу ирттерчĕç. Унта 22 çын пулнă.

Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлэкенсем Сталин юлташăн чи сывăх соратникне Ворошилов юлташа татах та нумай çулсем хушши пурăнма сывлăх сунаççĕ.

ПЕТРОВ.

Киргиз ССР—1941 çулти выставкăра анлăн кăтартмалли кандидат

Киргиз халăхĕ хăйĕн республики 15 çул тултарнине ялхуçалăхĕнче пысăк çитĕнӳсем тунипе паллă тăвать.

Сахăр кăшманĕн тухăçĕ тĕлĕшпе тĕнчери рекорда Киргизия хăй аллинче тытса тăрать. 1940 çулта 15 пин гектар лаптăк çинчен вăтамран кашни гектартан 420-шер центнер сахăр кăшманĕ туса илнĕ. Юлашки тăватă çул хушшинче сахăр кăшманĕн вăтам тухăçĕ 358 центнер шутланнă. Хлопчатник тухăçĕ тĕлĕшпе Киргизия пирĕн çĕршывра чи малти вырăнта тăрать.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те Киргиз республики çĕршывра пĕрремĕш вырăна йышăнчĕ. Киргиз СС Республикинче выльăх-чĕрлĕх ферми тытман колхозсем пĕрре те çук.

Киргиз СС Республикине 1941 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче анлăн кăтартма экспонента тăратаççĕ.

Январь уйăхĕнче çĕркăмрăк кăлармалли плана тултарнă

Кăмрăк кăларас ĕç работникĕсем ВКП(б) XVIII конференцине производствăри çĕнĕ çĕнтерӳпе кĕтсе илеççĕ: январьте çĕркăмрăк кăлармалли плана ирттерсе тултарнă. Донбасри виçĕ комбинат январь планне ирттерсе тултарнă, çавăн пекех «Кузбассуголь», «Москвоуголь», «Уралуголь» комбинатчĕсем. Черемховский бассейн шахтисем, Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи тата Вăтам Азири шахтăсем те январь планне ирттерсе тултарнă. (ТАСС).

УЙРĂМ ОКРУГСЕНЧИ СУЙЛАВ КАМПАНИЙĔ

И. М. Чарыков юлташ Шупашкарти суйлавçăсен пухăвĕнче

Февралĕн 4-мĕшĕнче Строительсен клубне Шупашкар хулинчи интеллигенци пухăннă.

Пухăва довереннăй, 7-мĕш номерлĕ вăтам шкул директорĕ М. П. Макаров юлташ уçать. Вăл хăйĕн сăмахĕнче большевиксен партийĕ тата Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн çĕршыв тунă чаплă çитĕнӳсем çинчен, социализмлă çĕршывăн парламентне Ленин—Сталин парти ĕçне, коммунизм ĕçне, халăх ĕçне чĕререн парăннă çынсене суйлама кирли çинчен калать.

— Шупашкар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Иван Матвеевич Чарыков халăх шанăçне ĕçре тӳрре кăларма пултаракан çын, ăна Ленин—Сталин партийĕ пăхса çитĕнтернĕ, — тет Макаров юлташ. Вăл Шупашкар хулинчи интеллигенцине февралĕн 16-мĕшĕнче Чарыков юлташ кандидатуришĕн пĕр çын пек пулса сасăлама чĕнет.

Трибуна çинче ачасен 10-мĕш номерлĕ сачĕн заведующийĕ Никулина юлташ. Вăл хулари интеллигенцине Чарыков юлташăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа парать.

Ягунов тата Черпакова юлташсем те хулари совет интеллигенцине коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕ тăратнă кандидатурăшăн — Чарыков юлташшăн сасăлама, суйлав умĕнхи агитаци ĕçне анлăн сарма чĕнчĕç.

Вĕсем хыççăн И. М. Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче чи малтан хăйне СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратса пысăк хисеп тунăшăн суйлавçăсене тав турĕ.

— Эпĕ, — тет Чарыков юлташ, — халăх мана шанса панă пысăк ĕçе пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме пулатăп. Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, коммунизм тăвассишĕн, совет халăхĕшĕн кĕрешессинчен чыслă задача маншăн урăх çук.

Чарыков юлташ Чăваш республики умĕнче тăракан задачăсем çинче чарăнса тăрса, суйлавçăсене промышленноçра, ялхуçалăхĕнче, культура фронтĕнче çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвассишĕн кĕрешме чĕнет. Вăл уйрăмах ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ умĕнхи ăмăртăва анлăн сарса пыма кирлине палăртать.

Пуху пысăк çĕкленӳне иртрĕ, вăл хăйĕн резолюцийĕнче февралĕн 16-мĕшĕнче Чарыков юлташшăн пĕр çын пек пулса сасăлама пулчĕ.

Суйлав умĕнхи пухусем

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ, февралĕн 4-мĕш. **(Телефонпа).** Район центрĕ ялавсемпе илемленнĕ. Урамсенче лозунгсемпе плакатсем çакăнса тăраççĕ. Вĕсем ĕç-çыннисене килес суйлавсенче коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлама чĕнеççĕ.

506-мĕш номерлĕ Етĕрне суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Павлов юлташ хăйĕн суйлавçисемпе тĕл пулчĕ. Каçхине 6 сехетре культура çуртĕнче районри интеллигенци тата ялсенчен килнĕ довереннăйсем — пĕтĕмпе 350 çын пухăнчĕç.

Павлов юлташ сăмах илсе тухса каларĕ. Ана депутата суйлама кандидата тăратса пысăк шанăç хунăшăн вăл кунта пухăннă суйлавçăсене чĕререн тав турĕ.

—Эпĕ хамăн пĕтĕм вăя халăх ырлăхĕшĕн, Ленин — Сталин парти ĕçĕшĕн пама пулатăп, — терĕ Павлов юлташ.

Ун хыççăн Титов, Куцов, Сыромятников, Никитин суйлавçăсем тухса каларĕç. Вĕсем суйлав кунĕнче хăйсен сассисене Павлов юлташшăн пама чĕнчĕç.

Пуху хыççăн драмкружоксем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

ЯН. СИГАЕВ.
А. СЮЧАКОВ.

ЕТĔРНЕ. Февралĕн 1-мĕшĕнче çу тата спирт завочĕсенче ĕçлекен рабочисемпе служащисен тата инженерно-технически работниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура 506-мĕш номерлĕ Етĕрне сӳлав округĕн комиссийĕ Яков Кузьмич Павлов юлташăн кандидатурине регистрацилени çинчен пĕлтерчĕ.

Кун хыççăн Павлов юлташ хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа панă. Вăл рабочисене ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине производствăллă пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме чĕнчĕ. Икĕ завод коллективĕ те суйлавсен кунне февраль уйăхĕнчи плана 100 процент тултарнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

Т. ЯРАНДАЙКИН.

С. Е. Белолипецкий юлташ суйлавçăсем патĕнче

ВАРМАР, февралĕн 4-мĕш. **(Телефонпа).** Енер, февралĕн 3-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама Вăрмар суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат С. Е. Белолипецкий юлташ суйлавçăсемпе тĕл пулчĕ. Клуба суйлавçăсем 300 çын пухăнчĕç. Вĕсем хăйсен кандидатне ăшшăн кĕтсе илчĕç.

Белолипецкий юлташ суйлавçăсен пухăвĕнче сăмах каларĕ. Малтанах вăл пысăк шанăç хурса хăйне СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнăшăн суйлавçăсене тав турĕ, вĕсен шанăçне ĕçре тӳрре кăларма пулчĕ. Унтан вăл совет çĕршывĕ Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе тунă пысăк çĕнтерӳсем çинчен каласа панă. Суйлавçăсем унăн сăмахне пысăк тимлĕхпе итлерĕç.

Т. КОЖИН.

Суйлавсене пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илетпер

СЕНТЕР. Ярославка ялсоветне кĕрекен «Первая борозда», «Ново-Чемей», «1 Августа» тата «Ударник» колхозсенче Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарьне И. М. Чарыков юлташа кандидата тăратнине ырлаççĕ. Вĕсем мĕнпур суйлавçăсене Чарыков юлташшăн сасăлама чĕнсе каланине пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç.

Суйлав умĕнхи пухусенче колхозниксемпе колхозницăсем суйлав кунĕнче пурте пĕр çын пек пулса Чарыков юлташăн сасăлама пулаççĕ. Колхозсем халĕ суйлав кунне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

Пур колхозсенче те çуракине хатĕрленсе çитнине тепĕр хут тĕрĕслесе тухаççĕ, туса çитереймен ĕçсене хăвăрт вĕçлесе çитерме тăрăшаççĕ.

Колхозсенчи агитаторсем лайăх ĕçлеççĕ. Участоксенчи суйлав комиссисем суйлав çурчĕсене, кабинăсене, суйлав ещĕкĕсене хатĕрлесе çитернĕ.

Н. МИХЕЕВ.

Суйлав умĕнхи агитаци

ОКТЯБРЬСКОЕ. ВКП(б) райкомĕ суйлав кампанине ăнăçлăн ирттерме хатĕрленсе пынă май, агитколлектив руководителĕсен семинарне ирттерчĕ. Семинар хыççăн агитаторсем вырăнсенче агитаци ĕçне тытăнчĕç. Паянхи куна районра 27 агитколлективра 525 агитатор ĕçе тытăннă. Вĕсенчен 240 агитатор 12 суйлав участокĕсенче тата 7 суйлав округĕсенче ĕçлеççĕ. Чылай агитколлективсенче агитаторсем валли консультацисем ирттернĕ. Кĕчкейри агитколлективра 20 агитатор ĕççыннисем хушшинче куллен калаçусем туса ирттереççĕ. Çӳлти Улмалуй агитколлективĕнче 18 агитатор ĕçлеççĕ, пухусенче тата группăсенче калаçусем йĕркеллĕ пулса иртеççĕ. Вĕсем колхозсенче 8 чуху ирттернĕ, суйлав Положенийĕ çинчен ăнлантарса параççĕ, суйлав ыйтăвĕпе стена хаçачĕсем кăлараççĕ.

Хальхи вăхăтра агитаторсем суйлавçăсене СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама 499-мĕш номерлĕ Вăрмар суйлав округĕ тăрăх тăратнă кандидатăн С. Е. Белолипецкий юлташăн биографийĕпе тата ĕççынни депутачĕсен районри Советне суйлама Çӳлти Улмалуйри 26-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх тăратнă кандидат И. П. Петров, Çатракассинчи 22-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх тăратнă кандидат В. И. Игнатьев юлташсен биографийĕсемпе паллаштараççĕ.

В. ПАВЛОВ.

Тĕплĕн хатĕрленес пулать

СОВЕТСКОЕ. Районра 30 суйлав участокĕ тунă. Суйлав участокĕсенчи комиссисем хăйсен ĕçне тытăннă. Суйлав çывхарса килет. Халĕ хĕрсе ĕçлемелли вăхăт пулса тăрать. Анчах, Советский районра çак ĕç хĕрӳллĕн пырать, теме çук-ха. Советское ял Совечĕн руководителĕсем суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе нимех те туман. Суйлав пулса иртмелли çуртсене палăртман, участоксенчи комиссисем ĕçе тытăнман.

Тойгильдино ял Совечĕ те çине тăрса ĕçлеме тытăнман. Суйлавçăсен списокĕсене тунă чухне тĕрлĕрен йăнăшсем пулнă. Хăшпĕр суйлавçăсене списока пачах кĕртмесĕр хăварнă. Суйлав ещĕкĕсене, кабинăсене хатĕрлемен. Токших ялĕнче лайăх клуб пур. Ялсовет исполкомĕ палăртнă тăрăх, суйлав участокĕ çав клубра вырнаçмалла. Анчах, клубра сивĕ, хутмаççĕ. Агитаторсем ĕçлемеççĕ. Çавна пула хăшпĕр колхозниксем суйлав хăш кун пулассине тата камăн сасăламаллине те пĕлмеççĕ.

Лапракас ялсоветне кĕрекен ялсенче суйлав ещĕкĕсем çĕмĕк, сĕтел-пукансем, лампăсем хатĕрлемен. Вулав çурчĕ начар ĕçлет, агитаторсем хăйсен ĕçĕсене тума пуçăнман.

Çак çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Суйлав кунне—февралĕн 16-мĕшне лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илмелле. Суйлав участокĕсенче политикăллă агитаци ĕçне анлăн сарса пымалла.

Я. МУРАТОВ.

Большевикла агитацин вăйĕ

Уйрăм округсем тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне тата вырăнти Советсене депутатсем суйламалли суйлав кампани пуçланса ВКП(б) Вăрмар райкомĕ халăх хушшинче политикăллă агитаци ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем турĕ. Пуçламĕш парторганизацисем, кандидат групписем тата комсомол организацисем агитаторсен йышне тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕç. Колхозри активистсене агитаци ĕçне анлăн хутшăнтарчĕç.

Халĕ агитаторсем суйлавçăсене Вăрмар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Белолипецкий юлташăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ.

Агитаторсем единоличниксем хушшинче ĕçлессине лайăхлатрĕç. Ку вăл суйлав кампани пуçланнăранпа районра единоличниксем 71 хуçалăх колхоза кĕнинчен аван курăнать. Ку тĕлĕшпе Чăрăш Çырмари, Тупахри, Тикашри агитаторсем лайăх ĕçлеççĕ. Çак ялсенче 7—13-шер хуçалăх колхоза кĕчĕç. Агитаторсем единоличниксене колхоз стройĕн чаплă çитĕнĕвĕсем çинчен ăнланмалла каласа параççĕ.

И. ЗАЙЦЕВ.

Агитаторсем ĕçре

СЕНТЕР. Уйрăм округсем тăрăх СССР Верховный Совечĕпе вырăнти Советсене депутатсем суйламалли куна ĕççыннисем пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Чылай колхозсенче агитаторсем суйлавçăсен хушшинче суйлав Положенийĕ тата Сталинла Конституци çинчен ăнлантарса парас ĕçе лайăх йĕркеленĕ.

Шупуç ялсоветĕнчи агитаторсенчен Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учительници Л. Яшмолкина юлташ каçсерен суйлавçăсем патне кайса калаçусем туса ирттерет. Пухусене тухайман ватă çынсене килĕсене кайса ăнлантарса парать. Яшмолкина юлташ 81 çулти Трофим Семенов патне килне кайса калаçнă.

Шупуç ялсоветĕнчи 9 агитатор суйлавçăсем хушшинче Конституци çинчен ăнлантарса параççĕ.

Атапай ялсоветĕнчи «Крестьянин» колхозри пуçламĕш шкулти учитель Наганов юлташ агротехникăна вĕренекен кружокра суйлавçăсене суйлав Положенийĕ, Сталинла Конституци çинчен каласа ăнлантарать.

Г. СОЛОВЬЕВ.

Совет интеллигенцин районри пухăвĕ

ЕТĔРНЕ, февралĕн 4-мĕш. **(Телефонпа).** Февралĕн 3-мĕшĕнче Етĕрне хулинчи интеллигенцин пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура 600 çын ытла пулчĕ. Интеллигенци пухăвĕнче СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама Етĕрне суйлав округĕ тăрăх кандидата тăратнă Я. К. Павлов юлташ сăмах тухса каларĕ.

Яков Кузьмич Павлов юлташăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен институтра унпа пĕрле вĕреннĕ Кузнецова юлташ тĕплĕн каласа панă.

Интеллигенци пухăвĕ февралĕн 16-мĕшĕнче Павлов юлташ кандидатуришĕн сасăлама пулчĕ.

Т. Я.

168 пин тенкĕ тупăш илнĕ

Киров ячĕпе тăракан колхоз пахча-çимĕçсем лартса тăвас ĕçе çулсеренех ӳстерсе пырать. Иртнĕ çулта 9 гектар çинче пахча-çимĕçсем лартса ӳстернĕ. Вĕсене сутса колхоз 168 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

А. СОЛОВЬЕВ.

ЮТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Европăри тата Африкăри вăрçă

(1941 çулти февралĕн 4-мĕшĕнчи вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Февралĕн 3-мĕшĕнче Хĕвелтухăç Африкăра хаяр çапăсусем пынă. Итали командованийĕ февралĕн 4-мĕшĕнче кăларнă сводкăра англичансем Агордатпа Барентуна (Эритрея) туртса илни çинчен официальнăй йĕркепех пĕлтернĕ.

Англи войскисем Асмара еннелле малалла наступлени туса пыраççĕ. Керен хулине атакăлаççĕ (Асмара патĕнчен 60 километрта).

Англичансем Барентуна туртса илни çинчен тĕплĕн пĕлтерсе, Рейтер агентствин корреспонденчĕ çакна палла тăвать: англичансем хулана виçĕ енчен хупăрласа илнĕ, çакăн хыççăн Италин 7 пин çынлă гарнизонĕн каялла чакмалла пулса тăнă. Çав корреспондент пĕлтернĕ тăрăхах, хальхи вăхăтра Эритрейăра 15 пин тăваткăл километр чухлĕ территорине, урăхла каласан, пĕтĕм Эритрейăн тăватă пайĕнчен пĕр пайне, англичансем хăй сен аллинче тытса тăраççĕ.

Хĕвелтухăç Африка фронтĕн кăнтăр участокĕнче Англи авиацийĕ халăх пурăнакан хăшпĕр пунктсем çине, вăл шутрах Могадишо порчĕ çине (Итали Сомалийĕ) пырса тапăннă.

Англири радио пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем Кенирен Абиссини территорийĕ çине 16 километр шалалла кĕнĕ.

Çурçĕр Африкăра вăрçă ĕçĕсем активлă пулман. Итали сводкинче икĕ енĕн авиацийĕ те активлăн ĕçлени çинчен çеç кăтартса панă. Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Ливире Англи авиацийĕ Триполи — Ливин хĕвеланăç пайĕнчи итальянецсен паха та кирлĕ порчĕ—çине пырса тапăннă, войскăсен соединенийĕсем çине пулеметсенчен пенĕ.

Февралĕн 3-мĕшĕнче Албание активлă çапăçусем пынă. Итали самолечĕсем Пелопоннесăн хĕвеланăç пайĕнчи çыранĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă. «Време» хаçатăн Афины хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Тепелене районĕнче Греци войскисем хăшпĕр çитĕнӳсем тунă. Малинăпа Подкожане хушшинче пысăк мар çапăçусем пулса иртнĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: фронтăн кăнтăрпа центральнăй участокĕсенче итальянецсем укрепленийĕллĕ лини тăваççĕ, вĕсем Тепелене хулинчен тухса кайма тата Бератпа Валонăна хӳтлеме хатĕрленеççĕ пулас. Валона патĕнчен кăнтăр енчи паха та кирлĕ высотасем пурте грексен аллинче. Итальянецсен аллинче — Валона патĕнчен çурçĕрпе хĕвеланăç енчи хăшпĕр высотасем.

Февралĕн 3-мĕшĕнче тата ыран февралĕн 4-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Лондон патĕнчи, Кăнтăр-Хĕвелтухăç Англипе Хĕвелтухăç Англири çар объекчĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Германири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, темиçе аэродромра ангарсене çĕмĕрсе, нумай самолетсене пĕтерсе тăкнă. Германин 3 самолечĕ пĕр хыпарсăр çухалнă.

Англи авиацийĕн министерстви кăларнă коммюникере çапла калана: Кент графствинчи çыранри хуласенчен пĕрин çине бомбăсем пырса пăрахнă вăхăтра хулана кăштах сиен кӳнĕ.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: ыран февралĕн 4-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсен соединенийĕсем Çурçĕр-Хĕвеланăç Франципи чылай çар объекчĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Февралĕн 4-мĕш. (ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центральнăй Китайра. Хэнань провинцийĕн кăнтăр пайĕнче çапăçусем çав-çавах пыраççĕ. Китай войскисем Синьянран çурçĕр-хĕвеланăç тата çурçĕр-хĕвелтухăç енче чылай пунктсене февралĕн 1-мĕшĕнче контрнаступлени пуçланă. Февралĕн 2-мĕшĕнче Китай войскисем, Бэйпин — Ханькоу чугунçулĕ тăрăхĕнче пулнă хаяр çапăçусем хыççăн, Япони войскисене Суйпинран кăнтăр еннелле хĕссе пынă. Японецсем Циошань патнелле чакнă. Шанцзай патĕнчи (Синьянран çурçĕр-хĕвелтухăç енче) çапăçусенче японецсен сынсем чылай пĕтнĕ.

Хэнань провинциначе китаецсем патне кашни кунах пысăк подкрепленисем пырса тăраççĕ. Февралĕн 1-мĕшĕнче Хэнань провинцийĕн кăнтăр пайне Китай салтакĕсем 10 пин çын ытла пырса çитнĕ.

Çурçĕр Китайра. Хэнань провинцийĕн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче Япони çар чаçĕ Вэньсяньрен çурçĕр-хĕвеланăç еннелле малалла куçса пынă. Пĕр кун хушши пынă вăйлă çапăçусем хыççăн японецсене каллех Вэньсянь патнелле каялла чакма тивнĕ.

Шаньси провинцийĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче Цзиньчэн районĕнчи поссе çулĕ çинче çапăçусем пыраççĕ.

Кăнтăр Китайри фронтри ĕçсем çинчен сведенисем çук.

* * *

Февралĕн 4-мĕшĕнче Японин 18 самолечĕ, икĕ группăпа, Хочжуань хули çине (Чунцинран çурçĕр-хĕвеланăç енче) бомбăсем пăрахнă. Хула çине вут чĕртекен бомбăсем нумай пăрахнă; темиçе тĕлте пушарсем тухнă.

Февралĕн 4-мĕш. (ТАСС).

Румыни правительствин коммюники

БУХАРЕСТ, февралĕн 4-мĕш. (ТАСС). Румынири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: «Февралĕн 3-мĕшĕнче тунтикун министрсен совечĕн ларăвĕ ҫыççăн (ларăва Антонеску генерал председатель пулса ертсе пынă) çакăн пек коммюнике пичетлэсе кăларнă: 1) Государство руководителĕ тулашри тата шалти лару-тăру çинчен каласа пĕлтернĕ; 2) юлашки уйăхсенче ĕçе илнĕ тата ĕçрен кăларнă государство чиновникĕсĕн списокне пăхса тухма йышăннă, çакна государство службинче дисциплинăллă чиновниксене кăна хăварас шутпа тăваççĕ; 3) Румынин Лондонри посланникĕ пулнă Тилеа нацие хирĕçле ĕçсем туса пынине шута илсе, çавăн пек ĕçсем Румыни государствин интересĕсене хирĕç пыраççĕ, ăна Румыни подданствинчен кăларма йышăнă; 4) юлашки кунсенчи йĕркесĕрлĕхсене хутшăннă священниксем тĕлĕшпе чи çирĕп мерăсем йышăнмалла пулать, 5) çĕршыв экономикине румынизацилэссине малашне те туса пыма йышăннă».

КĔСКЕН

х Финляндин снабжени министерстви февраль уйăхĕнче аш-какай памалли нормăна 20 процент чухлĕ пĕчĕклетнĕ.

х Шанхайра Китайăн частнăй банкĕн управляющине Чжи Сянь-цзина вĕлернĕ. Вăл Ван Цзин-вей майлă тăнипе паллă пулнă.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, февралĕн 4-мĕш. (ТАСС). Германи командованийĕ çапла пĕлтерет: операцисем вăхăтĕнче океанра Германи çар карапĕ противникăн таварсем илсе çӳрекен суднисене (вĕсен водоизмещенийĕ 29 пин тонна) путарнă. Германин подводнăй лодки противникăн суту-илӳ тумалли икĕ суднине путарнă, вăл суднăсен водоизмещенийĕ 11 пин тонна.

Февралĕн 3-мĕшĕнче Германи авиацийĕ Лондон таврашĕнчи тата Англин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи вăрçă тĕлĕшĕнчен паллă объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Мейдстон çывăхĕнче завод çуртне çĕмĕрнĕ. Темиçе аэродромра ангарсене, убежищесене çĕмĕрсе тăкнă тата самолетсене нумай пĕтернĕ. Февралĕн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Англин хĕвелтухăç пайĕнчи аэродромсемпе вăрçă тĕлĕшĕнчен паллă объектсем çине бомбăсем ăнăçлăн пăрахнă. Противник самолечĕсем Германи территорийĕ çине вĕççе пыман. Германин виçĕ самолет ним хыпарсăр пĕтнĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 3-мĕшĕнче ирпе тата кăнтăрла Германин пĕчченшер самолечĕсем, темиçе самолет, Англин хĕвелтухăç тата кăнтăр-хĕвелтухăç çыранĕ çине пырса тапăннă. Хĕвелтухăç Англири, Кент графствинчи тата Лондонри чылай пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Авиаци министерствин коммюникинче çапла каланă: Кент графствин тинĕс хĕрринчи пĕр хула çине бомбăсем пăрахса, ăна кăштах сиен тунă. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем чылай шутланаççĕ.

Лондон хĕрринчи пĕр район çине пысăк мар калибрлă фугаслă бомбăсем 16 бомба пăрахнă. Бомбăсем сиен кăвайман.

Февралĕн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германин пĕр самолечĕ Лондон таврашне вут чĕртекен темиçе бомба пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе тухнă пушарсене çийĕнчех сӳнтернĕ. Противник самолечĕсем хĕвелтухăç Англири икĕ пункт çине бомбăсем пăрахнă.

Противник пысăк активлăхах кăтартман.

Литвари нимĕçсене куçарса каяс ĕç тавра

БЕРЛИН, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: малтанах пĕлтернĕччĕ, Германи правительствипе Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн правительстви çакăн çинчен килĕшӳ тунă: Литва Советлă Социализмлă Республикинче пурăнакан нимĕçсем тата Германи подданнăйĕсем, хăйсен кăмăл пур пулсан, ирĕклĕн тата пĕр чăрмавсăрах Германие куçса кайма пултараççĕ. Договор ăна алă пуснă хыççăн, урăхла каласан, 1941 çулти январĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа вăй илнĕ. Нимĕçсен Литвари организацийĕсем хатĕрленӳллĕ ĕçсем туса ирттернипе Германин переселени тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕ ыран январĕн 23-мĕш тенĕ чух çĕрле хăй Литвана пырса çитсен çийĕнчех, Германие куçса кайма кăмăл тунă çынсене регистрацилеме пуçланă, вăл граждăнсене куçарса кайма хатĕрленӳллĕ ĕçсем сарса янă. Çывăх вăхăтрах переселенецсен пирвайхи групписене Германие ăсатса яраççĕ. Пĕр енчен нимĕç организацийĕсем тĕплĕн хатĕрленни тата унăн мĕнпур членĕсем туслăн ĕçлесе пыни, тепĕр енчен советăн тивĕçлĕ власĕсем пулăшу пани çакна шанса тăма май парать: нимĕçсене куçарса каяс ĕç пĕр чăрмавсăр тата шăпах палăртса хунă сроксенче пулса иртĕ.

Ĕç Вăйĕсен Резервисен Главнăй Управленинче

СССР Союзĕн Совнаркомĕ 1941 çулти январĕн 27-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх — Ĕç вăйĕсен Резервисен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнăй Управленийĕн начальникĕ П. Г. Москатов юлташ 1941 çулти январĕн 30-мĕшĕнче 1941 çулта фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсенче государство ĕç вăйĕсен резервисене хатĕрлес тĕлĕшпе хушса тумалли мероприятисем çинчен приказ кăларнă.

Главнăй Управлени Начальникĕ кăларнă приказпа çапла туса çирĕплетнĕ: çĕркăмăк, сăрт-ту руда промышленноçĕн, вăрман промышленноçĕн, строительство ĕçĕн тата стройматериалсен промышленноçĕн ФЗО шкулĕсенче ФЗО шкулĕсем государство заказĕсенэ тунипе илнĕ доходсен, çавăн пекех вĕренекенсем производствăра вĕреннĕ чух тунă ĕçсемшĕн илнĕ доходсен 80 процентне ĕçе тунă вĕренекенсэне алла параççĕ, 20 проценчĕ шкул директорĕн аллинче пулать — вĕренекенсемпе мастерсен культурăпа йăлари обслуживанине, çавăн пекех чи лайăх вĕренекенсемпэ мастерсене премисем парса хавхалантарас ĕçе каять.

Промышленноçăн ытти отраçлисен ФЗО шкулĕсенче доходсен 50 процентне ĕçе тунă вĕренекэнсене алла параççĕ, 50 проценчĕ шкул директорĕн аллинче пулать — вĕренекенсемпе мастерсен культурăпа йăлари обслуживанине, çавăн пекех чи лайăх вĕренекенсемпе мастерсене премисем парса хавхалантарас ĕçе каять. Çĕркăмăк, металлурги, сăрт-ту руда промышленноçĕн, вăрман промышленноçĕн, строительство ĕçĕн тата стройматэриалсен промышленноçĕн ФЗО шкулĕсенче вĕрэнекенсем валли çав шкулсенче вĕренекенсене тăрантарас ĕçе çаплатма 1941 çулта февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа средствăсем хушса панă.

ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсене тивĕçлĕ професcисем валли çирĕплетнĕ нормăсем тăрăх спецодежда параççĕ. СССР Совнаркомĕ йышăннă постановлени тăрăх, Главнăй Управлени Начальникĕн приказĕпэ çапла тума çирĕплетнĕ: ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсен предприятисенчи цехсенче производство ĕçне вĕренекэнсен спецодеждисене сыхласа усрас, юсас, çавас тата типĕтес ĕçе çав предприятисен тӳлевсĕр тумалла, ăна предприяти директорĕ ФЗО шкулĕн директорĕпе пĕрле палăртса хунă йĕркэпе тăваççĕ.

Кунсăр пуçне, СССР Союзĕн Совнаркомĕ йышăннă постановлени тăрăх, ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсене çаксэне параççĕ:

çурма-пальто — хлопчатобумажнăй тканьрен ăшне вата хурса çĕленĕскер;

гимнастерка тата брюки — хлопчатобумажнăй тканьрен;

ботинкăсем — сăранран;

картус — сукноран;

носкисем.

ССР Союзĕн Совнаркомĕ йышăннă постановлени тăрăх, Главнăй Управлени Начальникĕн приказĕпе çапла тума çирĕплетнĕ: вĕренекенсенэ паракан тумтирăн тата урана тăхăнмаллисен хакĕн 50 процентне государство шучĕпе тӳлеççĕ, 50 процентне вĕренекэнсене вĕсем тунă ĕçшĕн тӳлекен укçа сумминчен шкул директорĕ вĕренекенсенчен тытса юлать. Тумтирсемпе урана тăхăнмаллисен хакĕн 50 процентне вĕренӳ срокĕн тăршшĕнче пĕр пек пайсэмпе тыта-тыта юлаççĕ.

Главнăй Управлени Начальникĕн приказĕ тăрăх, ФЗО шкулĕнче вĕренекен тумтирĕн формине паллă тума çакăн пек паллăсем тунă: çурма-пальто çухави çинче петлицăсем;

петлицăсем çине мэталран тунă Ш.Ф.З.О саспаллисем тата шкул номерне кăтартса паракан цифрăсем çирĕплетсе лартаççĕ;

çурма-пальто петлицисен хĕррисене хура-кăвак пусмапа тыттарса тухнă (чугунçул ФЗО шкулĕсенче вĕрэнекенсем валли — хура-кĕрен пусмапа тыттарнă).

ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсем валли тумтир формисене тата тумтир çинчи паллăсене СССР Совнаркомĕ çирĕплетнĕ.

СССР Совнаркомĕ йышăннă решени тăрăх, ФЗО шкулĕсенчи çарпа физкультура ĕçне вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен воспитатель должноçĕ туса çирĕплетнĕ.

Приказ тăрăх 1941 çулта ССР Союзĕн центральнăй районĕсэмпе кăнтăр районĕсенчи вăрман промышленноçĕ валли массăллă профессиллĕ 100.000 рабочи хатĕрлемелле, вăл шутра: вăрман касакансем — 40.000 çын, возчик-трелевщиксем — 40.000 çын, тиес-пушатас тĕлĕшпе ĕçлекен рабочисемпе йывăç тасатса хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен рабочисем — 20.000 çын.

Çакăнта кăтартнă чухлĕ рабочисене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе Ĕç вăйĕсен Главнăй Управленийĕ ССР Наркомлесĕпе пĕрле Наркомлес вăрман промхозĕсэн бази çинче 239 ФЗО шкулĕ организацилет, вăл шкулсенче виçĕ уйăх хушши вĕренмелле пулать.

Вăрман промышленноçĕнчи рабочисен специальноçĕпе ФЗО шкулĕсенчен вĕрентсе тухнă çынсене пурне те ССР Союзĕн центральнăй районĕсемпе кăнтăр районĕсенчи вăрман промышленноçне ĕçе яраççĕ.

Приказ тăрăх 1941 çулта çавăн пекех 129 ФЗО шкулĕсенче стройматериалсен промышлэнноçĕ валли массăллă профессиллĕ рабочсем татах та 36.080 çын вĕрентсе хатĕрлеме çирĕплетнĕ, вĕсенчен: 3 уйăх хушши вĕренмелли ФЗО шкулĕсенче 29.180 çын вĕрентсе хатĕрлемелле, 6 уйăх вĕренмелли ФЗО шкулĕсенче 6.900 çын вĕрентсе хатĕрлемелле, çавăн пекэх тата цемент промышленноçĕ тата цемент тумалли çĕнĕ заводсен строительстви валли (футеровщиксем, бурильщиксем, чул ватакансем, каменщиксэм т. ыттисем) 16.200 çын вĕрентсе хатĕрлемелле.

Çак шкулсенче занятисем çакăн пек сроксенче пуçланмалла: пĕрремĕш черетпе вĕрентмеллисем валли — 1941 çулти апрелĕн 15-мĕшĕнчен, иккĕмĕш черет валли — 1941 çулти августăн 1-мĕшĕнчен.

Кăçалхи çул вăрман промышленноçĕпе стройматэриалсен промышленноçĕн ФЗО шкулĕсенче вĕрентме облаççенче, крайсенче тата республикăсенче колхозри çамрăк арçынсене тата ялти ытти çамрăк арçынсенэ — 17 çула çитнĕ çамрăксене — 136.080 çынна призыв йĕркипе илеççĕ.

Çĕнĕрен организацилекен ФЗО шкулĕсем валли ССР Вăрман Промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕпе ССР Стройматериалсен Промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ оборудованнисене çуртсем, çавăн пекех кирлĕ чухлĕ инструмент уйăрса параççĕ.

ФЗО шкулĕсенэ пĕрремĕш черетпе вĕрентме илмелли çамрăксен призывне (мобилизацине) облаççенче, крайсенче тата республикăсенче 1941 çулти мартăн 20-мĕшпе апрелĕн 10-мĕш хушшинче туса ирттереççĕ.

ФЗО шкулĕсенче халăх хуçалăхĕ валли массăллă профессиллĕ рабочисем хатĕрлес ĕç уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, Ĕç вăйĕсен Резервисен Главнăй Управленийĕн Начальникĕ Москатов юлташ ĕç вăйĕсен рез

Арбузсемпе дынясем çинчен

Колхозсенче туса ирттернĕ производствăллă опытсем çакна кăтартса пачĕç: пирĕн республикăра арбузсемпе дынясем лартса тăвас ĕçе массăллăн аталантарса пыма пулать.

Иртнĕ çулта республикăри мĕнпур районсенче тенĕ пекех арбузсем лартса ӳстерсе пăхрĕç. Результатсем начар мар пулчĕç. 1940 çулта арбуз пахчисен лаптăкĕшĕ 41 гектара çитсе ӳсрĕ, 1939 çулта 9 гектар çеç пулнă. Арбуз лартса тăвас ĕç ытларах Улатăр районĕнче сарăлнă. Кунта 23 гектар лартнă. Çĕрпӳ районĕнче 4 гектар, Кувакино — 3, Çĕмĕрле — 3 гектар.

«Победа Октября» колхозра (Улатăр р.) 3 гектар çине акса 1155 центнер, урăхла каласан, гектартан 385 центнер лайăх пиҫсе çитнĕ арбуз пухса илнĕ. Кашни арбуз пĕр килограмран пуҫласа 4,5 килограма çитнă тайнă.

Малтан вăрлăх акса шăтарса, унăн калчисене лартса Çĕрпӳ районĕнчи «Молодая сила» колхоз гектартан 500 центнер арбуз пуҫтарса илнĕ. «Красный бригадир» колхозра кашни гектар пуҫне 317 центнершер арбуз ӳстернĕ.

Вăрлăха малтан шăтарса унăн калчине лартса ӳстернинчен арбуз хăвăртрах — августăн 20—25-мĕш тĕлнелле пиҫсе çитет.

Арбузсемпе дынясем лартса ӳстерме ҫемҫе, кăпка сĕр кирлĕ. Унпа пĕрлех ир пиҫекен сортлă арбуз лартса тăвасси çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Иртнĕ çулта «Любимец хутора Пятигорска», «Стокса» тата ытти сортсене ытларах лартнă.

Республикăри нумай колхозсем кăнтăрта ӳсекен пахча-çимĕҫсене, уйрăмăнах арбуз лартса тăвасшăн. «Сортсемовощăн» Чăваш республикинчи отделенийĕ арбузпа дыня вăрлăхĕсене чылай кӳрсе килчĕ. Çак вăрлăхсене «Сортсемовощь» лавкисенче туянма пулать.

Кăçалхи çул арбузпа дыня туса илес ĕç çине ытларах çаврăнса пăхни кирлĕ. Вĕсене пирĕн хамăрăн республикăрах çителĕклĕ лартса тумалла, ăна валли условисем пур.

Р. ОСАНОВ.

Производствăллă çĕкленӳ

ЭЛЕК. Тури-Вылăри Сталин ячĕпе тăракан колхозра çуракине хатĕрленес ĕç хĕрӳллĕн пырать. Пĕр колхозник те ĕҫсĕр лармасть, кашниех хăйне панă ĕçе тăрăшса туса пырать. Колхозниксем, бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеҫҫĕ. Паянхи куна 40 гектар çине (4800 лав торф, 800 лав тислĕк кăларнă, çуртри акмалли пĕтĕм лаптăк çинче юр тытнă. Вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ.

Кăçал ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене звеносем тăрăх туса пыма план çирĕплетнĕ. Кашни бригадăрах звеносем уйăрнă, вĕсем ĕçлеме тытăннă. И. Борисов юлташ ертсе пыракан звено вир акмалли участок çине 100 лав ятлă хатĕрленĕ тислĕк кăларчĕ. Çапăсемпе юр тытаҫҫĕ, çапписене кашни юр çумассерен çӳлелле хăпартса пыраҫҫĕ, юр хулăмăшĕ 50—60 сантиметр ытла.

Ф. КАТАЙ.

Колхозри стахановла шкул

СЕНТЕР. Шомик ялсоветĕнчи «Колос» колхоз хĕрсех çуракине хатĕрленет. Колхоз активне агротехникăна вĕрентес майпа, кунта стахановла шкул организацилеҫҫĕ. Стахановла шкулта 38 çын вĕренет. Стахановла шкула агроном Юлин ертсе пырать. Планпа пăхнă тăрăх пурĕ 66 сехет вĕренмелле. Халĕ 5 заняти туса ирттернĕ. План тăрăх колхозра малта пыракан 5-мĕш бригадăн тырпул туса илес тĕлĕшпе тунă ĕçĕсемпе паллашма Бочков бригадирăн лекцине итлеме палăртнă. Унăн бригади иртнĕ çулта кашни гектартан вăтам шутпа 18,9 центнер тĕттырă туса илнĕ. Халĕ бригада çуракине хатĕрленет. Вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ, ясмăк вăрлăхне алăпа сортланă. Çавăн пекех бригада кĕл, кайăккĕшĕк тислĕкĕ пухас çĕрте те колхозра малта пырать.

Занятисене агроном Юлин тĕплĕн хатĕрленсе ирттерет. Колхозниксем агротехникăна юратса вĕренеҫҫĕ.

С. НАЛИМОВ.

Колхозри хата-лабораторисем

ИШЛЕЙ. Кибечкассинчи «Большевик» колхозра хата-лаборатори уҫма оборудованисем илме пулчĕç. Ҫурт уйăрса панă. Колхозниксем икĕ хутлă ҫуртăн иккĕмĕш хутне хăпараҫҫĕ. Таса, ăшă, ҫутă пӳлĕмсем. Çак пӳлĕмсенче хата-лаборатори вырнаçать.

Хата-лабораторинче ĕçлеме колхоз пĕр колхознике курсра вĕрентет. Унта вăл агротехникăна, зоотехникăна тата лабораторинче приборсемпе мĕнле ĕçлемеллине вĕренет.

Кăçал Ишлей районĕнче 10 колхозра хата-лабораторисем уҫма палăртнă.

С. ГОРЛАНОВ.

Çулйĕр бригади тăрăшса ĕçлет

КОМСОМОЛЬСКОЕ. «Красный Восток». колхоз çулйĕр ĕçне пысăк вырăна хурса, 1939 çул вĕҫĕнче колхозниксенчен уйрăм бригада организацилерĕ. Бригадăна ертсе пыма Павел Тихонов юлташа суйларĕç.

1941 çулта унăн план тăрăх 80 кубометр йывăç турттармалла, вăл 90 кубометр турттарнă. 200 кубометр йывăç хасмалла пулсан, 125 кубометр каснă. ВКП(б) XVIII конференцийĕ уҫăлнă тĕле хăйне панă плана вăл ытлашшипех тултарма обязательство илнĕ.

Е. ДЕРУСАВИН.

Паха результатсем

Краççин çутсанах колхозниксем правлени канцелярине пухăнса ларчĕç. Яланхи пекех хĕрӳллĕ калаçу пуçланчĕ.

— Колхозниксем пушă вăхăта савăнăçлă ирттересшĕн. Çав клуба мĕнле пулсан та март уйăхĕччен туса пĕтересехчĕ,—каласа хутшăнчĕ артель председателĕ Егор Тихонов.

Икĕ колхозник çĕнĕ пӳрт лартасси, пӳрт тăррине хăма витесси çинчен сăмах тапратрĕç. Çак кунсенчех иккĕшĕ пĕрле йывăç илме тухса кайма килĕшрĕç.

— Улăм витнĕ çуртйĕрĕн илемĕ çук. Кăçал пӳрт тăррине хăма витетĕпех,— терĕ вĕсенчен пĕри. Тепри те унпа килĕшрĕ.

Хăшĕсем патефон, гармонь илесси хăшĕсем лайăхрах çипуçсем çĕлетесси пăхăнасси çинчен калаçаççĕ. Председателĕн хăйĕн интерес. Хăвăртрах клуб туса çитерсе, радиоузел лартмалла. Колхозниксен килĕсене радио кĕртмелле. Тĕрĕссипе каласан, кунта пурин те пĕр шухăш. Çав ĕçсене пурне те хăвăртрах тумалла.

Çав вăхăтрах почтальон Мускавран, Тĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитетĕнчен янă çырăва илсе пычĕ. Председатель çырăва пĕр сăмах сиктермесĕр вуласа тухрĕ. Тырпул тăвас тата вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çитĕнӳ тунăшăн дипломпамалла тунине пĕлтерсе саламлă çыру янă.

Пĕрремĕш çыру мар вăл. 1939 çултанпа Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулса Главнăй Комитетран кунччен те çырусем илкеленĕ. Унтан килекен кашни çырурах колхоз тунă ӳсĕмсене мухтаççĕ. Малта пыракан колхозсен опычĕпе ĕçлесе татах та пысăк ӳсĕмсем тума ырлăх сунаççĕ.

Малта пыракан колхозниксем выставкăра пулса çĕршыври чи лайăх колхозсен ĕçĕсемпе паллашнă. Паха ĕç опычĕсене хăйсен колхозне илсе килнĕ.

Колхоз çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ туса пырать. 1940 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче тĕттырă тăвас тата обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тунă ӳсĕмсене анлăн кăтартса панă. 1939 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 15 центнер, 1940 çулта 16 центнер ытла тĕттырă туса илнĕ. Уйрăм культурăсем тăрăх илсен: ырăш 19 центнер, кĕрхи тулă—21, сĕлĕ—15, çурхи тулă—13, «Лорф» сортлă çĕрулми—205, выльăх кăшманĕ 258 центнер тухнă.

Вăйлă тырпул туса илессишĕн бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленĕ. Николаев юлташ ертсе пынă тăваттăлĕш бригада иртнĕ çулта каллех ăмăртура мала тухнă. Вăтам шутпа илсен кашни гектартан ырăш 22 центнер, кĕрхи тулă—22, çурхи тулă—14, сĕлĕ—16, урпа—17 центнер ытла туса илнĕ. Иккĕмĕш бригада кашни гектартан 250-шер центнер çĕрулми пухса кĕртнĕ.

Çĕртен вăл мĕн пама пултарнине пĕтĕмпех илессишĕн бригадăпа бригада, колхозникпе колхозник ăмăртса ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра кунта тупăшсене валеçесси пырать. Çулталăк хушши ĕçленин результатĕсем куç умне уççăн тухса тăраççĕ. Результатсем начар мар. Тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлени хăйĕн çимĕçĕсене кирлĕ чухлех тунă. Колхозăн общественăллă интересĕпе колхозниксен интересне тĕрĕс сыхăнтарса пынипе пулнă ĕнтĕ çак паха çимĕçсем. Колхозра ултă ферма. Выльăх-чĕрлĕхе усрама кирлĕ чухлĕ апат уйăрса хăварнă. Ялхуçалăх артелĕн уставĕнче кăтартнă пур фондсене те тунă. Çакăн хыççăн кашни ĕçкунĕ пуçне 4-шар килограмм ытла тĕттырă, 52-шер пус укçан валеçĕнет. Виҫшер килограмм ытла çĕрулми тата ытти пахча-çимĕҫсем валеçнĕ.

— Тырпула хăвăртрах валеҫсе пĕтерес тетпĕр, анчах та уйрăм колхозниксен хывма вырăн çук, çавăнпа илсе каймаççĕ. Хăшпĕрне леҫсех памалла пулать пулмалла. Валеҫмелли ырăш кăна тепĕр 700 центнер юлчĕ,—тет счетовод Скуратов.

Чăн та колхозниксем ĕçкунĕ пуçне тырпул, укçа-тенкĕ нумай илеççĕ. С. Михайлов çемьи 52 центнер ытла тĕттырă, 659 тенкĕ укçа, Г. Дмитриев—40 центнер тĕттырă, 500 тенкĕ укçа, М. Сергеев—43 центнер ытла тĕттырă, 549 тенкĕ укçа илеççĕ т. ыт. тт. Малтанхи çулсемпе танлаштарсан, иртнĕ çулта пур колхозниксем те лайăхрах ĕçленĕ. Лайăх ĕçлекен колхозниксен тырпул та, укçа-тенкĕ те çителĕклĕ пулать.

Тӳрĕ ĕçлени ахаль пулмарĕ. Тырпул та, укçа-тенкĕ те, ытти тĕрлĕ çимĕçсем те çителĕклĕ. Çĕнĕ çуртйĕрсем лартмалла, тĕрлĕ музыка инструменчĕсем туянмалла, лайăх çипуç тăхăнмалла, радио кĕрттермелле. Çакăн пек ыйтусене сӳтсе-явăççĕ «Емĕт» колхоз членĕсем.

Çĕрпӳ. **(Хамăр корр.).**

ПРОМЫШЛЕННОСТЬ 1940 ÇУЛТИ ПЛАНА ТУЛТАРНИН НĔСКЕ ИТОГĔСЕМ

Чаплă, пысăк çитĕнӳсемпе иртсе кайрĕ виҫҫĕмĕш пятилеткăн виҫҫĕмĕш çулĕ. Промышленность, ялхуçалăх, транспорт, культура пурте пит те пысăк çĕнтерӳсем турĕç, пирĕн çĕршыв коммунизмшăн кĕрешес ĕçре тепĕр пысăк утăм турĕ.

Ленин—Сталин партийĕн Центральный Комитечĕпе Совет правительстви халăх хуçалăхĕн экономикăллă вăй-хăватне тата çĕршывăн обороninе тĕреклетес тĕлĕшпе питĕ кирлĕ решенисем йышăнчĕç. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче тата июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указсем историллĕ документсем, пĕтĕм халăх хуçалăхне хăвăрттăн çĕкленине пулăшакан вăйлă хĕçпăлăсем пулса тăчĕç. Промышленноçпа транспорт валли пысăк квалификациллĕ рабочисем хатĕрлес тĕлĕшпе СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ СССР Государство ĕç вăйĕсен резервисене тăвасси çинчен Указ кăларчĕ.

Хулигансене тата «вак-тĕвек» текен çаратусене хирĕç кĕрешесси çинчен кăларнă Указ та пирĕн пурнăçра пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Çак Указсем предприятисен руководителĕсене государство панă плана тултарса пыма питĕ пысăк вăй-хăват тата майсем туса пачĕç. Июнĕн 26-мĕшĕнче тухнă Указ хыççăн прогульщиксен, летунсен тата производствăри ытти дезорганизаторсен çуначĕсем аманчĕç. Ĕç тата производство дисциплини çирĕпленсе пырать. Предприятисенче большевикла йĕркелĕх те çирĕпленет, ĕç тухăçлăхĕ ӳсет, стахановла движенипе социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пыраççĕ.

Пирĕн Чăваш АССР промышленноçĕ 1940 çулта пысăк çитĕнӳ турĕ. Государство промышленноçĕ продукци туса кăларас тĕлĕшпе çулталăкри плана 100,2 процент тултарчĕ, çав шутран Союзри наркоматсемпе организацисене пăхăнса тăракан промышленность — 100,4 процент, РСФСР организацисене пăхăнса тăракан предприятисем—110,6 процент, вырăнти промышленность (Чăваш АССР наркоматсемпе управленисене пăхăнса тăракан промышленность)—94,2 процент, райсоветсемпе хула совечĕсен промышленноçĕ—96,5 процент тултарнă. Продукци туса кăларасси чылай ӳснĕ. Пуринчен ытла, 1939 çултипе танлаштарсан, Наркомместпрома кĕрекен çăмăл промышленность 44,2 процент, РСФСР наркоматсене кĕрекен промышленность 38,6 процент тата райсоветсемпе хула совечĕсен промышленноçĕ 31,4 процент ӳстернĕ.

Çăмăл промышленность туса кăларакан продукцин хисепĕ ӳсни 1940 çулта Улатăрта, Канашра, Çĕмĕрлере, Сĕнтĕрвăрринче, Етĕрнере тата Куславккара тумтирсем çĕлекен мастерскойсем ӳнинчен нумай килнĕ. Унăн пуснe Шупашкарта уйрăм заказсем тăрăх атă-пушмаксем çĕлекен мастерскойсем ӳснă.

Апат-çимĕç продукци тăвакан предприятисене çĕнĕрен туса лартнă май райсоветсемпе хула совечĕсен промышленноçĕ те продукци кăларассине ӳстернĕ.

Куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларассине ӳстерме 1940 çулта Госбанкран миллион тенкĕ ытла (1153 пин тенкĕ) ссуда илнĕ. Республикăри районсенчен Тăвай районĕ кăна Госбанк панă укçана илмен. Комсомольский район—7 пин тенкĕ, Шупашкар районĕ—8 пин тенкĕ, Сĕнтĕр районĕ — 10 пин тенкĕ, Красноармейский район—12 пин тенкĕ анчах ссуда илнĕ. Шупашкар хулинчи организацисем 217 пин тенкĕ, Канаш районĕнчи—118 пин тенкĕ, Пăрачкав районĕ (райсовет исполкомĕ крахмал заводĕ туса лартма 100 пин тенкĕ илнĕ)—110 пин тенкĕ ссуда илсе, çав укçана çĕнĕ производствăсем тунă çĕре хывнă. Çĕмĕрле райсоветчĕн исполкомĕ банкран ссуда илсе конфект, премĕксем пĕçерекен тата тумтир çĕлекен мастерскойсем уçнă.

Ссуда илсе куллен кирлĕ таварсем тăвассине пысăклатни питĕ кăмăллă, ырă ĕç пулса тăрать, мĕншĕн тесен ăна вырăнти организацисем хăйсен ирĕкĕпе, хăйсем тăрăшшипе тăваççĕ. Акă Тăвай районĕнчи организацисенех илер. Вĕсем 1940 çулта куллен кирлĕ таварсене вырăнта тăвасшăн организацилеме пĕр пус та ссуда илмен. Ку районра куллен кирлĕ таварсене районрах çителĕклĕ туса кăлараççĕ теме çук. Тӳрех калас пулать, районра куллен кирлĕ таварсене пачах туса кăлармаççĕ. Районĕпе мĕнпурĕ те пĕр артель кăна. Райсовет исполкомне пăхăнса тăракан предприятисем пачах çук. Куллен кирлĕ таварсене çителĕклĕ туса кăларма Тăвай районĕн мĕн кирли йăлтах пур. Çавăнпа районри организацисем ытти районсенчен ытларах тăрăшса ĕçлемелле пек. Анчах эпир ăна курмаспăр, кунти руководительсен пуçарулăх çук. Черепица тăвакан завода тума 1939 çултах тытăннă, анчах халь те туса пĕтереймеççĕ.

Уйрăм предприятисене илсен, 1940 çулта Куславкка комбиначĕ, Канашри вагонсем юсакан завод, çăкăр пĕçерекен трест, Канашри тата Улатăрти типографисем, крахмалтрест, мельтрест лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем продукци туса кăлармалли çулталăкри плана ытлашшипех тултарчĕç. Çак предприятисемпе организацисенче стахановла движенипе социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пынă, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ июнĕн 26-мĕшĕнче тата июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указсене большевикла пурнăçа кĕртсе пынă. Прогулсем тăвакансем тата ĕçрен хăйсен ирĕкĕпе пăрахса каякансен хисепĕ нумай чакнă.

Чăваш АССР халăх-хуçалăх учечĕн Управленийĕ панă материалсем тăрăх, прогул тăвакансен тата ĕçрен хăйсен ирĕкĕпе тухса каякансен хисепĕ пирĕн промышленноçра июнĕн 26-мĕш хыççăн, унченхи тапхăрпа танлаштарсан, 4 хут ытла чакнă. Канашри вагонсем юсакан заводра январь—июнь уйăхĕсенче пĕтĕмпе 415 прогул пулнă пулсан, кайрахри 5 уйăх хушшинче 66 прогул пулнă тата 4 çын ĕçрен хăйсен ирĕкĕпе тухса кайнă. Ку та нумай-ха. вĕсем пачах пулмалла мар. Тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларни пысăк сиен кӳме пултарать. Прогульщиксене тата ĕç дисциплинине, ĕçĕн пахалăхне пăсакансене хирĕç малашне те хаярлăн кĕрешмелле.

Прогульщиксене хирĕç çителĕклĕ кĕрешмен пирки, производствăра большевикла йĕркелĕх çук пирки республикăри чылай предприятисем 1940 çулти плана тултараймарĕç. Буинскри сланец рудникĕнче прогульщиксене чылай вăхăтчен ирĕк пулнă, мĕншĕн тесен, рудник руководителĕсем прогульщиксене хирĕç çителĕклĕн кĕрешмен. Çавăншăн рудникăн главнăй инженерне В. С. Шебекона халăх суçĕ айăпланă. Рудник Управляющийĕ пулнă Хрипин хăй те прогулсем тунă. паллах, вăл прогульщиксене хирĕç кĕрешме пултарайман, ăна унăн партиретĕнчен кăларнă.

Ĕç дисциплинине хăпартни, социализмлă ăмăртăва пуçарса пыни мĕн пек пысăк вырăн йышăнса тăни ак çакăнтан та лайăх курăнса тăрать. Октябрь уйăхĕнче пирĕн предприятисенчи рабочисем, инженерно-технически работниксем тата служащисем Октябрьуявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Нумай предприятисем аслă уява пысăк çитĕнӳсемпе, чаплă парнесемпе кĕтсе илчĕç. Республикăри мĕнпур предприятисем яланах октябрь уйăхĕнчи пек ĕçленĕ пулсан, вĕсем çулталăк хушшинче планран ирттерсе 9,5 миллион тенкĕллĕх продукци туса кăларма пултаратчĕç. Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пуçланса кайнă ăмăртăва хутшăнсан декабрь уйăхĕнче те пирĕн промышленность пысăк çитĕнӳсем турĕ. Çавăнпа та предприяти директорĕсен, пуçламăш парторганизацисен, профсоюз организацисен руководителĕсен рабочисем, служащисем тата инженерсемпе техниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва татах та анлăрах сарса ярасси çине ытларах çаврăнса пăхмалла.

Технологи дисциплинине лайăх йĕркелесе, социализмлă ăмăртăва пуçарса пынман пиркиех ĕнтĕ хăшпĕр предприятисенче ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕкрĕ. Шупашкарти макарон фабрики ĕç тухăçлăхне хăпартмалли плана 65,5 процент, Шоркистрери кирпĕч завочĕ—55 процент, Етĕрнери спирт завочĕ—70 процент, Сĕнтĕрвăрринчи спиртзаовд—89 процент, Вăрнарти фосфорит завочĕ—69 процент тата Буинскри сланец рудникĕ—74,2 процент çеç тултарнă. Çак предприятисенчен пĕри те 1940 çулти плана тултарман.

Тепĕр пысăк çитменлĕх вăл—предприятисем, е цехсем, е уйрăм рабочисем тĕрлĕ сăлтавсемпе ĕçлемесĕр тăни. Етĕрнери çу çапакан заводăн 1940 çулти план тăрăх, кантăр тата йĕтĕн вăрринсенчен 5600 тонна çу çапса кăлармалла пулнă. ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ пулăшнипе завода 11 пин тонна ытла сырье (йĕтĕн тата кантăр вăрри) панă. Завод 1940 çулти плана срокчен тултарма пултарнă. Анчах плана 92,3 процент çеç тултарнă. Мĕншĕн-ха? Ноябрĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 10-мĕшĕчен завод вут-шанкă пулман пирки ĕçлемеи. Аварисем тата техникăллă кăлтăксем пулнă пирки 18 талăк ĕçсĕр тăнă.

Шупашкарти кирпĕчпе черепица тăвакан завод вут-шанкă пулман пирки 2 уйăх ĕçлемесĕр тăнă. Вăрнарти фосфорит заводĕнче экскаваторсен трос (тимĕр вĕрен) пулман, çавна пула нумай вăхăт хушши ĕçлемен. Мыслецри хăма çуракан завод йывăç çитмен пирки эрни-эрнипе чарăна-чарăна ларнă.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указ хыççăн чылай предприятисенче продукци пахалăхĕ ӳсрĕ. Ивановори кирпĕч завочĕ 1939 çулта пĕрремĕш сортлă кирпĕч 53 процент туса кăларнă пулсан, 1940 çулта 55,4 процент кăларнă. Анчах пур предприятисенче те продукци пахалăхĕ лайăхланса çитрĕ, теме пултараймастпăр. Технологи дисциплинине пăсса ĕçленĕ пирки япăх продукци туса кăларакан предприятисем те сахал мар. Шупашкарти кирпĕч завочĕн план тăрăх пĕрремĕш сортлă кирпĕч 65 процент туса кăлармалла пулнă, вăл 58 процент ытларах çеç туса кăларнă. Çĕрпӳри примус горелкисем тăвакан заводăн пĕрремĕш сортлă горелкăсем 75 процент туса кăлармалла пулнă, 34 процент ытларах кăна кăларнă. Браксем тунă пирки çак завод 9 уйăх хушшинче 42,4 пин тенкĕ убытка тӳснĕ.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларас плана 1940 çулта тултарман. Наркомместпром предприятийĕсем ку тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлерĕç, плана 42,5 процент кăна тултарчĕç. Чăвашпромсоюз тата Древпромсоюз системинчи промартельсем те иртнĕ çулта ăнăçлăн ĕçлесе пыраймарĕç. Çавăнпа та суту-илӳ организацийĕсем пирĕн промышленноçран темиçе миллион тенкĕлĕх тавар илеймерĕç.

Малта пыракан предприятисем пысăк пахалăхлă продукци туса кăларас плана тултарса пынипе пĕрлех продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн, ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн, накопленипе парассишĕн, чĕртавара, вут-шанкăна тата электричество энергине перекетлессишĕн, ĕçукçи фондне тĕрĕс расходлассишĕн кĕрешеççĕ. Паллах, çак ыйтусем халăх хуçалăхĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çавăнпа та предприяти ĕçне хак панă чух продукци туса кăларас плана тултарнине çеç илсе хак пани тĕрĕс пулмасть. Предприяти ĕçне хакланă чух продукци туса кăларма мĕн чухлĕ ĕç вăйĕ, чĕртавар, вут-шанкă, электроэнерги т. ыт. те расходланине лайăх тĕплесе пăхас пулать.

Куславкка комбиначĕ 11 уйăх хушшинче продукци хакне 13,6 процент йӳнетсе (план тăрăх 6,46 процент йӳнетмелле пулнă) пĕр миллион та 45 пин тенкĕлĕх экономи панă. Крахмалтреста кĕрекен заводсем продукци хакне 19 процент ытла йӳнетнĕ. Анчах чылай предприятисенче продукци хакне йӳнетес тĕлĕшпе ĕç япăх тăрать-ха (мельтрест, спиртзаводсем, Вăрнарти фосфорит завочĕ т. ыт. те.).

Иртнĕ çулта стахановецсен йышĕ нумай ӳсрĕ. Канаш районĕнчи предприятисенче 1800 ытла стахановец, 1100 ударник. Улатăрти паровозсем юсакан заводри токарь Канов юлташа, Канашри вагонсем юсакан заводри Кукляев, Цапин, Журба, Сидоров тата ытти юлташсене те пирĕн республикăра лайăх пĕлеççĕ. Вĕсем республикăри паллă стахановецсем. Стахановла движенине социализмлă ăмăрту пур предприятисенче те ăнăçлăн аталанса пырать, тепĕр калама пултараймастпăр. Вăрнарти фосфорит заводĕнче 1939 çулти ноябрь уйăхĕнче 55 стахановец пулнă пулсан, 1940 çулти ноябрь уйăхĕнче 98 çеç пулнă. Ку ĕнтĕ социализмлă ăмăртупа стахановла движенине куллен ертсе пыманнине кăтартса парать.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ куллен кирлĕ таварсене туса кăларас ĕçе анлăлатас тĕлĕшпе йышăннă постановлени пирĕн умма питĕ пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Вăл постановлени вырăнти промышленность ĕçне çĕкленме питĕ лайăх условисем туса парать. Çак постановленине пурнăçа кĕртсе пыраççĕ большевикла кĕрешмелле, социализмлă ăмăртупа стахановла движенине татах та анлăн сарса ямалла.

Çулталăкри плана ăнăçлăн тултарас тетпĕр пулсан, производствăллă плана кунран-куна, уйăхран-уйăха ытлашшипех тултарса пырас пулать. Кашни рабочи, работница хăйĕн планне кунсерен тултарса пытăр. 1941 çул çĕнĕ те чаплă çĕнтерӳсен çулĕ пултăр. Ленин—Сталин партийĕ, пирĕн аслă çулпуç Сталин ертсе пынипе 1941 çулти хуçалăх çулне кăтартуллăн вĕçлессишĕн чăннипех большевикла кĕрешер.

Д. ДУБИНИН.

Юр тытни—вăйлă тырпул никĕсĕ

1940 çулти ноябрĕн 5-мĕшĕнче Чăваш АССР Совнаркомĕ 1940—1941 çул валли агротехникăллă мероприятисене палăртрĕ. Çав постановленире юр тытасси çинчен уйрăмăнах çирĕппĕн каласа хăварнă. Совнарком Чăваш республикинче 200 пин гектар çинче юр тытма, çавна май 558.000 штук щит хатĕрлеме план çирĕплетрĕ.

Юр тытни мĕнле усă панине республикăри колхозсем юлашки çулсенче аван туйса илчĕç. Чи малтанах, вăл нӳрлĕхе ытларах пухма, нӳрлĕхе пĕр пек расходлама май парать. Опытлă станцисен чылай çулсем хушшинчи опычĕсем хĕллехи вăхăтра çунă юра вăйлă çил вĕçтерсе кайнине кăтартса панă. Юра вĕçтерсе каясран щитсем лартнипе, çапăсем, чăрăш лăссисем пăрахса тухнипе тата ытти майсемпе чарма пулать.

Республикăри малта пыракан колхозсен тата вăйлă тырпул мастерĕсен опычĕ тырпул тухăçне ӳстерес ĕçре юр тытни пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартса панă. Иртнĕ çулта Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз 240 гектарлă лаптăк çинче, Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз 246 гектар çинче юр тытнă. Асăннă колхозсем вара пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç.

Вильямс академик кăтартса панă тăрăх, тăпрари кашни 50 миллиметр нӳрлĕх гектартан 12 центнер тĕттырă туса илме май парать. Кунсăр пуçне юр сийĕ хулăм пулни тăпра тарăн шăнасран сыхлать. Çавна май вара çуркунне тăпра хăвăртрах ăшăнать, юртан ирĕлсе пулнă шыв юхса каяймасть, тăпрана сăрхăнса кĕрет

Кĕрхи тырăсем, клевер акнă лаптăксем çине тытнă юр калчасене ăшăтса тăрать, шăнса пĕтесрен сыхлать. Пирĕн республикăри колхозсенче кĕрхи çулăпа клевер калчисем çулсеренех пăнса йышлăн пĕтеççĕ. Юлашкинчен юр тытни ӳсен-тăрансем удобренисемпе усă курассине ӳстерет. Тăпрара нӳрлĕх чылай пулни ӳсен-тăрансене çăвăрт çитĕнсе çирĕпленме условия туса парать.

Уйра юр тытса купалантарни пур культурăсен тухăçне те ӳстерет. Тĕттырă хуçалăх институчĕн çирĕм çулхи опычĕ юр тытни кашни гектар çинче кĕрхи тулă тухăçне 5,6 центнер, кĕрхи ырăш тухăçне 4,1 центнер, çурхи тулă тухăçне 3,8 центнер ӳстернине кăтартса панă.

Юр тытни, агротехникăн ытти комплексĕпе пĕрле (тарăн сухалани, удобренисемпе усă курни, сортлă вăрлăхсем акни), пысăкрах тухăçлă тырпул туса илме май парать. Юр тытассине пăснă е çак мероприятине хакламан çĕрте агротехникăн ытти мероприятийĕсем те пысăк усă параймаççĕ.

Чи малтанах кĕрхи тырăсем, нумай çул хушши ӳсекен куракăсем акнă лаптăксем çинче юр тытмалла. Юр тытма тĕрлĕрен майсем пур. Вĕсенчен щитсемпе тытни, ытти майсемпе танлаштарсан, пысăкрах усă парать. Щитсен çарлакăшĕ 2 метр, çӳллĕшĕ 0,75 метр пулма кирлĕ. Вĕсене кашни колхозрах çăмăллăн хатĕрлеме пулать. Щитсене хăмасенчен те тума юрать. Лайăх тунă тата йĕркеллĕ пăхса усранă щитсемпе виҫ-тăват çул тата унтан та ытларах усă курма пулать

Юр тытас шутпа уйра щитсене шахматла йĕркепе лартса тухаççĕ. Щитсен хушшинчи вырăн вĕсем мĕн чухлĕ пулнинчен килет. Кашни гектар çине 40 щит лартса тухнă чухне вĕсен хушши 16 метр, 50 щит чухне—14,5 метр, 60 щит чухне—13 метр пулма кирлĕ. Çавах та кашни гектар çине 60—75 щитран кая мар лартса тухмалла. Мĕншĕн тесен сахал лартса тухнă чухне юр сахалтарах хупăрланать, юра çил вĕçтерсе каять. Щитсене çиле хирĕç лартса тухас пулать.

Хĕл вăхăтĕнче юр купаланса пынă май, щитсене темиçе хутчен пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса лартма пулать. Пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса лартни щитсем сахал чухне уйрăмăнах усăллă. Çавăнпа та щитсене вăхăтра куçарса лартас ĕçе сăнарсах тăмалла.

Тăвай районĕнчи Чапаев ячĕпе тăваканкалхоза пĕр щит та хатĕрлемен. Ывăç темĕн чухлĕ пулсан та щитсем тума материалсем çук, тесе калаçаççĕ. Кăçал щитсем тума кашни район валли çителĕклĕ таран ывăç панă. Кашни колхозăн щитсем пулмалла.

Халĕ пур колхозсенче те юр тытас ĕçе анлăн сарса пыраççĕ. Вĕсем юр çăвиччеенех, кĕркуннех щитсем тухса лартнă, юр купаланса пынă май, вĕсене урăх вырăна куçарса пынă.

Анчах, уйрăм районсенче сĕрĕç работникĕсем, çăвăн пекех колхоз руководителĕсем агротехникăллă пысăк мероприятине хакламанни палăрать. Куславкка, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Вăрмар тата Первомайский районĕсем юр тытассипе начар ĕçлеççĕ. Вĕсем юр тытмалли плана 20 процентран пуçласа 34 процента çити çеç тултарнă.

Хăшпĕр колхозсенче юр тытассине ячĕшĕн кăна ирттереççĕ, ĕç пахалăхĕ çине çăвăрăнса пăхмаççĕ. Сăмахран Елчĕк районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозра уйра пĕчĕк купасем тунă та юр тытнă тесе, шутлаççĕ. Юртан тунă пĕчĕк купасене çил вĕçтерсе каять. Колхозăн щитсем тума май пулнă, ăна валли йывăç та панă. Анчах, ку вăхăта çитсе те пĕр кубла метр турттарса силмен. Пуринпĕн те паллă, çакăн пек йĕркепе юр тытни нимĕнле усă тăмалла пултараймасть, ĕçкунĕсене, ĕç вăйне усăсăр пĕтерни çеç пулать.

Юр тытас ĕç çине ответсăрла пăхнине пĕтермелле. Пире агротехника енчен уйра тĕрĕс юр тытни кирлĕ. Вăл пирĕн колхозсенче тырпул тухăçне ӳстерме пулăштăр.

Чылай колхозсенче юр тытмалли инвентарьсене япăх пăхса усраççĕ. Çавна пула вара вĕсене кашни çул çĕнĕрен тумалла пулать. Кашни колхозăн щитсен хуçалăхĕнче çирĕп йĕрке пулмалла, юр тытмалли мĕнпур инвентарь учетра тăмалла.

Уйра юр тытмалли вăхăт тахçанах пуçланнă. Январь, февраль тата март уйăхĕсенче юр нумай çăвать. Райĕрĕç пайĕсен, машинно-тракторнăй станцисен задачи—юр тытас ĕç мĕнле пуласа пынине кашни колхозра тĕрĕслесе тухасси, ĕçре пулăшу парса пырасси пулать. Юр тытмалли плана тултарассишĕн кашни районăн, колхозăн çине тăрса кĕрешмелле.

ВРАЧ КАНАШĔСЕМ

Шăм-шакка çирĕплетессишĕн

Хĕллехи кунсенче, ăшăрах çанталăкра та, хулари урамсенче (ялсенче те çавах) çамрăк е вăй-питти сыпсемех пальто çухисене тăратса, мулахай хăйсене антарса е тата пите-куçа урăх майпа хупăрласа çурекенсене час-часах курма пулать.

Çавăн пек сынсем хăйсене хăйсем сивĕрен тата тăм илесрен сыхласçĕ пулас. Анчах учреждение çитме 5—10 минута кăна кирлĕ пулсан, хула е ял хушшинчех тăм илесрен хăрани, пирĕн шутпа, кулăшла япала кăна пулса тăрать. Ун пек хупăрланса çӳренинчен сывлăхшăн нименле усă та çук. Хĕллехи сывлăш чи таса, çирĕп сывлăш. Унпа ытларах усă курни организма паттăрланма кăна пулăшать. Тусансăр, çирĕп тата уçă сывлăшра ытларах пулма сывă çынсен кăна мар, ӳпке туберкулезĕпе чирлисен те тăрăшмалла. Тепĕр енчен, хăвна ху кирлĕ мар çĕртенех ытлашши хупăрласа çӳрени çанталăк улшăнăвĕсене хăнăхма чарать. Ун пек çын кĕтмен çĕртен пăртак сивĕ тивнипех е хупăрласларни уçăлса кайсанах, сывлăш сасартăк улшăннипе, гриппа-мĕнпе часах чирлет.

Пирĕн çамрăксен кирек мĕнле çанталăка та хăнăхма пĕлмелле. Çакна иртнĕ хĕлле Финляндире пулнă событисем питех те уççăн кăтартса пачĕç. Хĕрлĕ Çара сивве те, ăшша та пĕр пек тӳсме пултаракан çирĕп çынсем кирлĕ. Çавна тума пирĕн килтех, учреждение çӳренĕ хушăрах вĕренмелле, хăнăхмалла. Тепĕр тесен ăна пурнăçлама нимĕн йывăрри те çук. Организма майĕпен хăнăхтарса кăна пымалла. Унтан тата, шăм-шакка тĕреклетмелли çăмăл майсемпе, врачсем патне çӳремесĕрех, май килнĕ таран уçă курмаля. Ку тĕлĕшрен хĕллехи вăхăтра эпир çак майсене пурнăçлама сĕнетпĕр:

Ирхине тата кăçхине сивĕ шывпа 5—6 минута хушши питĕллипе çанçурăма сăтăрма такам та пултарать. Çак май нерва системине çирĕплетес ĕçре пит усăллă япала пулса тăрать. Унтан, сивĕ шыв юн тымарĕсене малтан хĕссе, кайран сарса янипе газообмен тенине вăйлатать. Çавăн хыççăн çынăн пĕтĕм состоянийĕ лайăхланать. Çак майпа кашни кун усă курма нервăллă çынсене пушшех сĕнмелле.

Ирхине тӳшек çинчен тăрсанах аялти кĕле-йĕм вĕççĕн гимнастика (зарядка) тума та нимĕн йывăрри те çук. Кунта радио тăрăх паракан уроксемпе усă курма та аван. Паллă, физически ĕç ĕçлемен çынсен мышцисем, шăммисем юлхав пулаççĕ. Сăмахран, мышцăна пĕртте ĕçлеттермесен вăл хуллен майĕпе типсе (атрофия) пырать. Ун пек çын хăй те вăйсăрланса, иммерленсе пырать. Çав вăхăтрах, мышцăсене икĕ уйăх хушши ĕçлеттерсе вĕсен вăйне 500 проц. таран çитиччен ӳстернĕ опыт литературăра пур (Моссо, Монка опычĕсем). Унтан, ĕçлекен мышца патне юн 7—10 хут ытларах пырать, çакăнтан юнçавăрнăшĕ те лайăхланать. Гимнастика туни ал-урасене çирĕплетнисĕр пуçне аппетита та хытă ӳстерет, ăна калори шучĕ икĕ хут ытларах кирлĕ.

Йĕлтĕрпе çӳрени оборонăшăн та, çынăн хăйĕн сывлăхĕшĕн те питĕ усăллă. Ку май ал-урасене, сыпăсене тата вĕсен вăйĕсене нимрен ытла çирĕплетет. Унсăр пуçне, ӳпке тĕрекленет, газообмен 500 проц. таран çитиччен ӳсме пултăрать, çимĕçсем ăшра хăвăртрах çунса каяççĕ, япаласен обменĕ лайăхланать, аппетит ӳссе каять. Йĕлтĕрпе çӳрекен çынна, йывăр физически ĕç тăвакан çынпа танах, калори 4300 е ытларах кирлĕ, ахаль çын 2100 калорирен ытла йышăнаймасть.

Сывлăха тĕреклетекен çакăн пек майсем çемьере татах пур.

Эпир футбол е çавăн пек ытти япаласем çинчен час-часах калаçатпăр. Анчах килте тума кирлĕ çăмăл майсене нумай чух астумасăр хăваратпăр. Çав вăхăтрах килти майсем пурне те юрăхлă, тивĕçлĕ, çăмăл тата массăллă майсем пулса тăраççĕ. Вĕсемпе усă курманнипе, хамăр организма çирĕплетме тăрăшманнипе хĕллехи кунсенче вара кирлĕ, усăллă сывлăшран хăраса хупăрланса çӳретпĕр. Çамрăк çынсене мĕнле килĕштĕр вăл? Тепĕр тесен, пурнăç çулне вăрăмлатасси çав асăннă япаласене пурнăçланинчен те килнине ăнланса илме ăс та нумаях кирлĕ мар.

Организма çирĕплетес задачăна малашне çивĕч тата сарлакан лартмалла. Вăл ĕç уйрăм, интересленекен пĕчĕн çынсен ĕçĕ кăна пулмалла мар. Кунта комсомолпа профсоюзсен те хăйсен хастарлăхне кăтартмалла.

К. ПАЙРАШ.

Наркомземри драмкружокра

Çак кунсенче Наркомземри драмкружок семинара килнĕ колхоз председателĕсене «Песня о Катерине» ятлă спектакль лартса пачĕ.

Драмкружок колхозсене те тухса çӳрет. Нумаях пулмасть Каганович ячĕпе тăракан колхоза (Шупашкар р.) кайса килчĕ. Çитес кунсенче «Социализм» колхоза кайма хатĕрленет.

И. КОНДАКОВ.

Шупашкарти хĕрарăмсен консультацийĕнче. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: килхуçи хĕрарăмĕ А. С. Стеклова (сылтăмра) врач-консультант М. М. Хазова юлташ патĕнче приемра. К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

СУЙЛАВ ТАКМАКĔСЕМ

Сталинла Аслă Конституци пире çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарать. Сталинла Конституци пирĕн вăй-хала, кăмăл-туйăма çĕклет. Сталинла Конституци тивлечĕпех эпир ирĕклĕ суйлав правипе туллин усă куратпăр.

Суйлав кунĕ пирĕн совет халăхĕн чаплă уявĕсенчен пĕри пулса тăчĕ. Суйлав кунне кашни çын чаплăран та чаплă çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илме тăрăшнине эпир халăх сăвви-юррисенче те лайăх куратпăр.

Сап-сар хĕвел пăхнă чух
Эп сар кайăк пуллăтăм,
Суйлав кунĕ çитнĕ чух
Стахановец пуллăтăм.

Çĕнтерӳсем тума пире коммунистсен партийĕ тата унăн аслă çулпуçĕ Сталин юлташ куллен-кун пулăшса, ертсе пыраççĕ. Вĕсем пирĕн совет халăхне демократиллĕ, ирĕклĕ суйлав туса пачĕç. Пирĕн чăваш халăхĕ, аслă çĕршыври тăванлă халăхсемпе пĕрле, суйлав çинчен çапла юрлать:

Ылттăн шăрçа кĕмĕшке,
Мăя çыхма илемлĕ.
Çĕн суйлавра çĕнĕлле
Суйламашкăн илемлĕ.

Пирĕн халăх хăйĕн хаваслă пурнăçĕ çинчен юрă урлă сăнласа панине куратпăр:

Çап-çутă витре эп йăтрăм
Çӳрен ута шăварма,
Киле кĕртрĕм радио
Суйлав çинчен ăнланма.
Çавра кӳлĕ варринче
Ылттăн куккук йăви пур.
Пирĕн совет çĕрĕнче
Аслă çулпуç Сталин пур

Аслă Сталин ятне кашни суйлавçă чи ырă кăмăлпа асăнать, пĕтĕм чĕререн мухтаса юрлать.

Сталинла Конституци, ытти пур анлă правăсемпе пĕрлех, хĕрарăмпа арçына пĕртан право пачĕ. Хаваслă, телейлĕ, ирĕклĕ пурнăçпа пурăнакан пирĕн пĕтĕм халăх Аслă Сталин çакăн пек право пани çинчен çапла сăвăлать:

Сарă-хĕрлĕ чечекне
Мĕншĕн пĕрле тытас мар,
Хĕрарăмпа арçынне
Мĕншĕн танах суйлас мар.

Е тата:

Манăн калпак—мамăкран,
Çампа ăшă вăл парать.
Çĕнĕ суйлав пахаран
Пур халăх та савăнать.

Суйлав кунне халăх пысăк савăнăçпа кĕтет. Халăхăн вăй-хăвачĕ, çĕкленӳллĕ савăнăçĕ курăнать фольклорта. Хĕвел ăшшипе чечек сарăлнă пек, Сталинла Конституци тивлечĕпе суйлав та савăнăçлă пулса иртет. Акă мĕнле юрлаççĕ кун пирки пирĕн суйлавçăсем:

Чечек пултăр, сарă пултăр,
Сар хĕвелте сарăлтăр.
Суйлав пултăр, маттур пултăр,
Пур халăх та пухăнтăр.

Халăх кама суйламаллине лайăх пĕлет, камшăн вăл хăйĕн сассине парассине малтанах пĕлсе тăрать:

Хĕрлĕ лента вĕçĕнче
Ылттăн шăрçа пулинччĕ,
Депутатсем хушшинче
Стахановец пулинччĕ.

Çĕн лавкари тутăрне
Тĕсне пĕлсе илер-и,
Çак суйлаври депутатне
Ĕçне пĕлсе суйлар-и.

Халăх сăвви-юррисем, халăх геройĕсем пекех, вилĕмсĕр. Вĕсем социализмла производствăн кашни отраслинче геройла ĕçсем тума хавхалантараççĕ. Халăх геройĕсене пирĕн суйлавçăсем хăйсен юрри-сăввисенче тивĕçлипе мухтаççĕ, вĕсемшĕн хăйсен сасне пама чĕнеççĕ:

Шăпчăк-кайăк, хатĕр пул
Тул çутăлсан юрлама.
Эс, суйлавçă, хатĕр пул
Суйлав çитсен суйлама.

Çĕнтерӳсен уявне, савăнăçсен сехетне кашни суйлавçă хавассăн кĕтет. Пирĕн суйлавсем совет демократине, хамăран государствăна татах та тĕреклетме пулăшнине, ĕççыннисене Ленин—Сталин партийĕ тавра пĕтĕçтернине суйлавçăсем лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа та:

Сарă-хĕрлĕ чечекне
Мĕншĕн алла тытас мар.
Çĕн суйлавăн пуххине
Ма савăнса каяс мар.

Листи-листи шурă хут
Кам çырмасăр тăрĕ-ши?
Çĕн суйлавăн пуххине
Кам пымасăр чăтĕ-ши?

Шурăмпуçĕ хăпарать
Тул çутăлнă вăхăтра.
Пур суйлавçă савăнать
Çĕнĕ, ирĕк суйлавра.

Февралĕн 16-мĕшĕнче — коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн çĕнтерĕвĕсен кунĕнче—пирĕн суйлавçăсем, çĕнĕрен те çĕнĕ юрăсем юрласа, суйлав участокĕсене утĕç. Вăл кун вара пурте:

Пулса çитнĕ ыраша
Эп вырмасăр тăрас çук.
Паян чĕннĕ суйлава
Эп каймасăр тăрас çук.—

тесе çĕршывăн мухтавлă ывăл-хĕрĕсемшĕн сасăлама кайĕç.

МАКСИМ ЯСТРАН.

„Паха тĕрĕ“ артелĕнче

КУКЕÇ. «Паха тĕрĕ» артелĕ Шупашкар районĕнче чи пысăк артель пулса тăрать.

Артелĕн мастерскойĕнче пĕтĕмпе 79 çын ĕçлет, вĕсенчен пурте пекех çамрăк хĕрачасем. Вĕсем хаваслăн ĕçлеççĕ, хăйсен ĕçри пĕлĕвне куллен ӳстерсе пыраççĕ. Паха костюмсем, пальтосем çĕлеççĕ. Чи паха тĕрĕсем тĕрлеççĕ, пиравăр тĕртеççĕ тата пĕвеççĕ.

Артель 1940 çулти производство планне 138 процент тултарнă. 1939 çултипе танлаштарсан ĕç тухăçлăхне 20 процент ӳстернĕ. Туса кăларакан таваран хакĕ 1,3 процент йӳнелнĕ.

1941 çулта артель татах та лайăхрах ĕçлессишĕн тăрăшать. Кăçал артель Шупашкарти çĕлĕк çĕлекен артельпе ăмăртать. Артельре социализмлă ăмăртăва анлăн сарнă. Партин XVIII конференцийĕ уçăлнă тĕле артель пĕрремĕш квартал планне 70 процент тултарма обязательство илнĕ. Уйрăмăн, пиравăр пĕветекен цех 1-мĕш квартал планне тултарнă. Цех начальникĕ комсомолка Анна Филиппова тăрăшса ĕçлет. Кашни кунах ĕç хыççăн хăйĕн цехĕнче производствăллă канашлу туса ирттерет. Çавнашкалах çĕвĕ çĕлекен цех та кашни кунхи плана 200 процентран кая мар тултарса пырать. Çĕвĕç Иван Федоров кашни кунхи нормăна 250 процентран кая мар тултарать. Çĕвĕ çĕлекен цехра стахановецсем 80 процент. Артельре стахановецсен йышĕ хăвăрт ӳсет.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» йышăннă постановлението артель членĕсен пухăвĕнче сӳтсе-явнă. Пуху пиравăр пĕветекен цеха аслăлатма йышăннă. Артель правленийĕ 30 пин тенкĕлĕх мастерской лартма тытăннă.

Я. СОКОЛОВ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: СССР Наукăсен Академийĕн Мускавра тăвакан çурчĕн проекчĕ. Проект авторĕ — архитектура академикĕ А. Щусев. (ТАСС фото-ӳкерчĕкĕ).

Кантăкран тунă вата

Кантăк ватăпа тĕрлĕ лабораторисенче кислоталлă ирĕлчĕксене фильтр витĕр ярса тасатнă чухне усă кураççĕ. Кунта ахаль вата юрăхлă мар, мĕншĕн тесен кислотасем ахаль ватăна çунгарса хуратса, кăмăраклантарса яраççĕ.

Кантăк вата ахаль вата пекех шапшурă пулать. Вăл ахаль ватăран чылай тĕреклĕрех. Ахаль вата çĕрме пултарать, кантăк вата çĕрмест, çунмасть. Ахаль ватăна тĕрлĕ микробсем пăсма пултараççĕ, кантăк вата нимле микробран та хăрамасть. Ăна тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсем те, хышлакан чĕрлĕхсем те тивмеççĕ. Çакăн пирки кантăк ватăпа хальхи вăхăтра тĕрлĕ пахча-çимĕçсене çитĕнтернĕ чухне усă кураççĕ.

Усен-тăрансене сыхлассине ĕçе кĕртес тесе кантăк ватăран хулăнăшĕ пĕр-икĕ сантиметр, урлăш-тăршшĕне кирлĕ таран виçсе татăксем тăваççĕ. Çакăн йышши татăкăн лапăкĕшĕ пĕр тăваткăл метр пулсан, унăн йывăрăшĕ пĕр килограмма яхăн пулать.

Çуркунне çимĕçсене акнă хыççăн хăш çимĕçсен вăрлăхĕсем час шăтса тухаймаççĕ. Вĕсене çĕрте нӳрĕ çителĕклĕ пулманни аптратать. Пуринчен ытла тарăнмар акмалли вăрăсем шăтаймаççĕ, мĕншĕн тесен çĕрĕн çиелти сийĕ пит час типет те, вара ӳсен-тăран вăрлăхĕ типсе каять. Çакăн пек чухне кантăк ватăпа усă кураççĕ. Пĕр-пĕр вăрлăха акнă хыççăн çак вырăна çиелтен кантăк ватăпа витеççĕ. Вара çĕрĕн çиелти сийĕ типмен пирки çимĕç вăрлăхĕ часах шăтса тухать.

Çулла пахча-çимĕçсене шăварнă хыççăн çĕр часах типсе каять. Çакăн пирки шăварни пахча-çимĕçне çителĕклĕ усă памасть. Ватăпа витнĕ çĕрге шыв час типмест. Унтан тата кантăк ватăпа çĕрçырли, хурăн çырли çитĕнтерекен вырăна çырла пулнă чухне те витсе усрама май килет. Çапла витсе тăни çырласене ӳсме чармасть, мĕншĕн тесен вата витĕр çутă çулçăсем çине çителĕклĕ ӳкет, çав вăхăтрах çырласем çине тусан тавраш ӳкмест, вĕсем таса пулаççĕ.

Унтан тата кантăк ватăпа пахча-çимĕçсене çуркуннехи сивĕрен хăтарма пулать. Çуркунне кăнтăрла ăшă пулсан та, çĕрле тата ирхине çителĕклĕ ăшă пулман пирки, тĕрлĕ ӳсен-тăрансем пĕтсе лараççĕ. Кантăк ватăпа витсен, ӳсен-тăрансем ирхи сивĕпе аптрамаççĕ. Кантăк ватăпа парниксен, теплицăсен кĕленчине витеççĕ, вата çилпе вĕçсе каясран, ăна тимĕртен тунă сеткăпа витеççĕ. Вара тулта чылай сивĕ пулсан та теплицăсенче çителĕклĕ ăшă тăрать. Хăш чухне парниксене кантăк вырăнне кантăк ватăпа витеççĕ. Çапла туни пĕр енчен кантăкпа витнинчен аванрах пулать, мĕншĕн тесен çапла тунипе парнике çителĕклĕ сывлăш кĕрет, парникри çимĕçсем сывлăш çитменнипе аптăрамаççĕ.

Тата акă çакна сăнанă: кĕркунне кантăк ватăпа хӳтлесе хăварнă ӳсентăрансем çуркунне ытти ӳсен-тăрансенчен сыхлама пулать. Ватăран хурткăпшанкăсене тытмалли ункăсем тăваççĕ. Çак ункăсене акă çапла тăваççĕ. Малтан пĕр-пĕр хулăн хут çумне сыпăçтарнă пусмана смалапа сĕрсе йывăç туни хуппи çине сыпăçтарса хураççĕ. Хут çине пĕр сий кантăк вата хураççĕ те çинçе кантăрапа сыхса хураççĕ. Çапла тунине хурткăпшанкăсене тытакан ункăсем, теççĕ. Çак пĕр ункăран çӳлерех тата тепĕр çавăн йышши ункăсем тумалла. Сиенлĕ хурт-кăпшанкăсем кĕркунне çанталăк сивĕтме тытăнсан йывăççен хупнипечи тĕрлĕ шăтăксем, шырлăксем ăшне кĕрсе пытанаççĕ. Çĕртен çӳлелле хăпарнă чухне хурт-кăпшанкăсем вата тĕлне çитсен, çакăнта вырнаçаççĕ те сивĕ çанталăкран пытанаççĕ. Ватăн çӳлти вĕçне тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсене пĕтерекен имçам сапсан, вара вата ăшне пытаннă хурт-кăпшанкăсем вилсе пĕтеççĕ, çуркунне чĕрĕлеймеççĕ. Çуркунне çитсен çак ватăран тунă хурт-кăпшанкăсене тытмалли ункăсене вутта пăрахса çунтараççĕ. Вутра ункăн пусми, хулăн хучĕ, тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсем пĕтĕмпех çунса каяççĕ. Вата çунмасть, ăна сивĕтсен каллех усă курма пулать.

Çапла кантăк вата ӳсен-тăрансене сивĕрен, ытла вĕрирен тата тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсенчен сыхлас çĕрте питĕ усăллă.

Кантăк ватăна тĕрлĕ япаласенчен, вĕсене хутăштарса 1370 градус вĕрире шăратса тăваççĕ. Çак шăратнă япалаша сивĕтсен кантăк евĕрлĕ витĕр курăнакан хытă япала пулать, ăна кантăкаш темелле. Шăраннă хыççăн çак шĕвĕ япалаша питĕ пĕчĕк шăтăксем витĕр каларсан, вара питĕ çинçе кантăк çипсем пулса тухаççĕ. Çак вĕтĕ çипсенчен вара, кантăк вата пулать. Хăш чухне çак питĕ çинçе пулакан çипсене пĕрлештерсе пĕтĕреççĕ те, вара кантăк çиппи пулать. Кантăк çипписенчен тĕрлĕ пиравăр, пусмасем тума та май килет. Халĕ çак ĕçе тума та пуçланă. Кантăк çипписенчен тунă пиравăр вутран хăрамасть, вăл çунмасть, çĕрмест.

Ф. К.

Çыхăну ĕçĕ аванлансах пырать

Шăхасан районĕнчи çыхăну уйрăмĕ юлашки вăхăтра аван ĕçлеме тытăнчĕ. Районра пĕр почта уйрăмĕ, 8 почта агентстви шутланать. Почта начальникĕ Д. Иванов юлташ çыхăну ĕçне аванлатассишĕн тăрăшать. Çыхăну конторин Октябрьскинĕ районри çыхăну уйрăмĕпе ăмăртать. Кунсăр пуçне кашни отделени пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ.

Çыхăну работникĕсен кашни уйăхра икĕ хутчен производствăллă канашлу пулса иртет.

Кадрсен квалификацине хăпартас майпа почта работникĕсем хушшинче ятарласа техминимум кружокĕ тунă.

Почта работникĕсем хăйсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстернĕ май, ĕç тухăçлăхĕпе ĕç пахалăхĕ те хăпарсах пырать. Иртнĕ çулта çулталăкри производствăллă плана 109,4 процент тултарнă. Радиоузел, союзпечать, телеграф уйрăмăнах лайăх ĕçлеççĕ.

Çыхăну работникĕсем партин XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнчĕç. Халĕ хăйсем çине илнĕ обязательствăсене тăпа витеççĕ. Çапла туни пĕр енчен кантăкпа витнинчен аванрах пулать, мĕншĕн тесен çапла тунипе парнике çителĕклĕ сывлăш кĕрет, парникри çимĕçсем сывлăш çитменнипе аптăрамаççĕ.

Тата акă çакна сăнанă: кĕркунне кантăк ватăпа хӳтлесе хăварнă ӳсентăрансем çуркунне ытти ӳсен-тăрансенчен сыхлама пулать. Ватăран хурткăпшанкăсене тытмалли ункăсем тăваççĕ. Çак ункăсене акă çапла тăваççĕ. Малтан пĕр-пĕр хулăн хут çумне сыпăçтарнă пусмана смалапа сĕрсе йывăç туни хуппи çине сыпăçтарса хураççĕ. Хут çине пĕр сий кантăк вата хураççĕ те çинçе кантăрапа сыхса хураççĕ. Çапла тунине хурткăпшанкăсене тытакан ункăсем, теççĕ. Çак пĕр ункăран çӳлерех тата тепĕр çавăн йышши ункăсем тумалла. Сиенлĕ хурт-кăпшанкăсем кĕркунне çанталăк сивĕтме тытăнсан йывăççен хупнипечи тĕрлĕ шăтăксем, шырлăксем ăшне кĕрсе пытанаççĕ. Çĕртен çӳлелле хăпарнă чухне хурт-кăпшанкăсем вата тĕлне çитсен, çакăнта вырнаçаççĕ те сивĕ çанталăкран пытанаççĕ. Ватăн çӳлти вĕçне тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсене пĕтерекен имçам сапсан, вара вата ăшне пытаннă хурт-кăпшанкăсем вилсе пĕтеççĕ, çуркунне чĕрĕлеймеççĕ. Çуркунне çитсен çак ватăран тунă хурт-кăпшанкăсене тытмалли ункăсене вутта пăрахса çунтараççĕ. Вутра ункăн пусми, хулăн хучĕ, тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсем пĕтĕмпех çунса каяççĕ. Вата çунмасть, ăна сивĕтсен каллех усă курма пулать.

Çапла кантăк вата ӳсен-тăрансене сивĕрен, ытла вĕрирен тата тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсенчен сыхлас çĕрте питĕ усăллă.

Кантăк ватăна тĕрлĕ япаласенчен, вĕсене хутăштарса 1370 градус вĕрире шăратса тăваççĕ. Çак шăратнă япалаша сивĕтсен кантăк евĕрлĕ витĕр курăнакан хытă япала пулать, ăна кантăкаш темелле. Шăраннă хыççăн çак шĕвĕ япалаша питĕ пĕчĕк шăтăксем витĕр каларсан, вара питĕ çинçе кантăк çипсем пулса тухаççĕ. Çак вĕтĕ çипсенчен вара, кантăк вата пулать. Хăш чухне çак питĕ çинçе пулакан çипсене пĕрлештерсе пĕтĕреççĕ те, вара кантăк çиппи пулать. Кантăк çипписенчен тĕрлĕ пиравăр, пусмасем тума та май килет. Халĕ çак ĕçе тума та пуçланă. Кантăк çипписенчен тунă пиравăр вутран хăрамасть, вăл çунмасть, çĕрмест.

Ф. К.

Пулă тытассине темиçе хут ӳстермелле

Пирĕн республикăра пулă тытассине йĕркелеме пур условисем те çителĕклĕ. 150 километр тăршшĕне яхăн Атăл, 65 километр тăршшĕ Сура шывĕ пур. Кунсăр пуçне кӳлĕсем 150 ытла е 740 гектар шутланаççĕ. Çак шывсенче пулă ĕрчетес тата тытас ĕçе йĕркелесен, пулă сутассине чылай лайăхлатма пултаратпăр.

Анчах пирĕн республикăри рыбтрест пулă тытас ĕçе йĕркеленĕ теме çукха. Ку ĕçе çулран çул лайăхлатса пымалла пек, анчах ĕçсем пачах урăхла тăраççĕ. Вăл çулран çул каялла чакса пырать. Сăмахран, 1931 çулта 3281 центнер пулă тытнă, 1934 çулта—2524 центнер, 1936 çулта—2406 центнер, 1938 çулта—2039 центнер, 1939 çулта—1849 центнер кăна тытнă. 1940 çулти плана та 66,6 процент кăна тултарнă. Рыбтрестăн пулă тытакан артельсем пĕтĕмпе 8. Вĕсенче пĕрмай ĕçлекен пулăçсем 182 çын, çуллахи вăхăтра 200 çынран иртет. Иртнĕ çулта пулă тытас плана пĕр артель те тултарман.

Рыбтрест руководителĕсем хăйсен начар ĕçне тĕрлĕ сăлтавсемпе витме пăхаççĕ: «Çуркунне сивĕ çанталăк тăчĕ. Сура шывĕнче пулă сахалланчĕ. Юлашки виçĕ çул хушшинче Атăлти пулăсем нумай пăчăхса вилсе пĕтрĕç, кунта та пулă сахалланчĕ»,—теççĕ. Рыбтрест руководителĕсен шучĕпе çак сăлтавсем пирки плана тултарайман пулать. Паллах, ку тĕрĕс мар, тата пачах кулăшла япала. Плана тултарманнинн тĕп сăлтавĕ вăл—пулă тытакан артельсенче ĕç дисциплинине йĕркелеменни тата рыбтрест ку артельсене ертсе пыманни пулать. Рыбтрест артельсен ĕçне контроль туса пымасть. Çавăнпа та чи лайăх пулăна артельте ĕçлекенсем хăйсемех хаклă хакпа сутса пĕтереççĕ, юлашки чи начар, вĕтĕ пулăна вара рыбтреста параççĕ.

Сĕнтĕрвăрринчи колхоз 3 çула яхăн ĕнтĕ пулă тытса пурăнать. Ку артель пулă тытма лайăх вĕренсе çитнĕ. Ĕç хатĕрĕсем те лайăх. Çапах та иртнĕ çулта пулă тытас плана 54 процент кăна тултарнă. Мĕншĕн тесен, кунти уйрăм пулăçсем (Павлов, Пучков, Дмитриев) тытнă пулăна вăрласа сутса пурăннă. Павлов 83 килограмм стерлядь пулăна хаклă хакпа сутнă. Ольтикассинчи бригадăра та çаван пекех, кунта та тытнă пулăна аяккалла сутса пурăннă. Государствăна хирĕçле çак ĕçе Пучков бригадир ертсе пынă.

Пăрачкаври пулă тытакан колхозра та пысăк çитменлĕхсем пулнă. Пулăçсем хушшинче ĕç дисциплини çирĕп пулман пирки 1940 çулта 1939 çултинчен 65 центнер сахалрах пулă тытнă. Ухов, Муссорин, Карякин пулăçсем чи лайăх шултра пулăна хаклă хакпа сутса пурăннă, укçине хăйсен кăсъисене чикнĕ. Колхоз правленин председателĕ Артамонов юлташ пулă тытнă çĕре кайса та курман.

Шашкарти пулă тытакан артелĕн ĕçĕсем çинчен уйрăмăн чарăнса тăмалла. Çак артель республика столицине—Шупашкар хулине пулă тăратать. Анчах Шупашкарти ĕççыннисем ку пулла курмаççĕ тесен те тĕрĕсех пулать. Ку артельре рыбтрест руководителĕсем те час-часах пулаççĕ. Анчах артель çапах начар ĕçлет. Иртнĕ çулта пулă тытас плана 87 процент кăна тултарнă. Кунта та пулă вăрлакансем, ăна вăрттăн аяккалла сутакансем сахал мар. Лайăх шултра пулăсене унтакунта салатса пĕтереççĕ те, чи начар, вĕтĕ пулăна Шупашкар хулине тăратаççĕ. Чылай пулăçсем ĕçке ярăннă, вĕсем ĕçкĕлле темĕн чухлĕ пулă вăрттăн салатнă.

Пулăçсен бригадирĕ пулса ĕçленĕ О. Петров 1940 çулта пионерсен лагерьне тата Шупашкарти «Пекарь» артеле 1500 тенкĕлĕх пулă сутнă. Кунсăр пуçне тата уйрăм çынсене мĕн чухлĕ пулă сутнă пулĕ вăл! Государство пурлăхне çаратса пурăннă Петров ĕçне тахçанах суд аллине панă. Анчах ку ĕçе вĕçне çитермен, Петрова ответ тыттарман-ха. Ку артельре хĕллехи вăхăтра пулă тытас ĕçе йĕркелемен. Кăçалхи январь уйăхĕнче 10 кун хушшинче 5 центнер кăна пулă тытнă.

Рыбтрест зеркальнăй карп ятлă пулăна ĕрчетес тĕлĕшпе пачах ĕçлемест. Çак пулăна ĕрчетме пирĕн пысăк условисем пур, вĕсем валли кӳлĕсем 150 шутланаççĕ. Иртнĕ çулта çак кӳлĕсенчен кашни гектар пуçне 230 килограмм пулă илнĕ. Çак кӳлĕсенче зеркальнăй карп ĕрчетсен, рыбтрест ĕççыннисем валли пĕр çулталăкра 1170 центнер пулă пама пултарать. Кунсăр пуçне иртнĕ çулта республикăри колхозсем темĕн чухлĕ кӳлĕсем çĕнĕрен турĕç. Вăл кӳлĕсенчен чылайăшĕнче пулă ĕрчетме май пур. Сăмахран, шутласа пăхнă тăрăх, 175 кӳлĕре зеркальнăй карп ĕрчетме май пур. Ку кӳлĕсен лаптăкĕ 356 гектара çитет. Вĕсенче пулă ĕрчетсен çулталăкра 800 центнер пулă тытма пулать. Çапла вара республикăри кӳлĕсенче çулталăкра 4000 центнер таран пулă тытма май пур. Анчах рыбтрест зеркальнăй карп ĕрчетес тĕлĕшпе пит те начар ĕçлет. Ку таринччен çак пулăна ĕрчетекен питомник туман-ха. 1940 çулти план тăрăх, 213 гектар çинчи кӳлĕсене 75000 зеркальнăй карп пулă ямалла пулнă. Кун пирки нумай каласа нă, анчах кӳлĕсенче зеркальнăй карп ĕрчетес плана тултарман.

СССР Совнаркомĕ тата ЦК ВКП(б) «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» йышăннă постановлението сӳтсе-явнă хыççăн, рыбтрест хăйĕн ĕçне тĕпренех лайăхлатма палăртрĕ. Пулă тытассине йĕркелес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерме йышăннă. Пулă тытмалли япаласене çителĕклĕ хатĕрленĕ. Ку таринччен пулă тытас ĕçе механизацилени пулман, халĕ Шашкарти пулă тытакан артелĕн ĕçне механизацилеме палăртнă. Хĕллехи вăхăтра пăр çăлнă пулă тытма 15 невод илсе хатĕрленĕ.

Зеркальнăй карп ĕрчетес тĕлĕшпе те татăклă ĕçсем тума палăртнă. Рыбтрестăн халĕ хăйĕн Шупашкарти питомникĕнче 40—50 пин зеркальнăй карп пур. 1941 çулта РСФСР Наркомрыбпромĕ пирĕн республикăри рыбтреста Тутар республикинчи питомникран 60000 зеркальнăй карп пама палăртнă. Çак шутран 30—40 пинне колхозсене пама шутлаççĕ. Кунсăр пуçне рыбтрест Мордва республикинчен 20—30 пин зеркальнăй карп илсе килет. Çапла вара кӳлĕсенче зеркальнăй карп ĕрчетме майсем пур. Кăна пурнăçлас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлени кăна кирлĕ.

Пулă тытас тĕлĕшпе рыбтрестăн кăна мар, ытти организацисен те (Чăвашсоюз, Промсоюз, Чăвашторг, Чебторг, столовăйсен тресчĕ) ĕçлени кирлĕ. Ку организацисене 1940 çултах пулă тытмалли вырăнсем çирĕплетсе панă, анчах вĕсем хатĕрсем çук пирки 1940 çулта пулă тытас ĕçе йĕркелемен. Чебторгăн артелĕ 3,5 тонна пулă тытас вырăнне 100 килограмм кăна тытнă. Халĕ Чебторг пулă тытмалли япаласем хатĕрлет, бригада организацинленĕ. 1941 çулта 15 тонна тытма палăртнă. Столовăйсен тресчĕ те 15 тонна пулă тытма шутлать.

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) постановленийĕ вырăнти продовольстви таварĕсем туса кăларассине ӳстермелли майсене кăтартса пачĕ. Халĕ ĕнтĕ пур ĕç те хамăртан килет. Рыбтреста ĕлĕкхи меслетсемпе ĕçлени килĕшмест, халĕ ĕçе урăхлатса çĕнетни кирлĕ, чи малтан артельсенчи дисциплинăна хăпартмалла, вĕсен ĕçне куллен контроль туса тăмалла.

П-в.

„Неравный брак“ комедине лартма тытăнчĕç

Февралĕн 5-мĕшĕнче Чăвашсен Государство Академи Театрĕ «Неравный брак» ятлă комедине лартма тытăнчĕ.

Комедин содержанийĕ çапла: Америкăри пĕр миллионерăн Шпигельглэзăн хăйĕн ашшĕ хушса хăварнине пурнăçлас ĕмĕтпе Совет Союзне килсе Куриловцы ятлă местечкăра пурăнакан еврей хĕрне кавча илмелле пулнă. Анчах унăн пуянлăхне пысăк вырăна хуракан, миллионерпа çыхăнса Совет Союзне пăрахса кайма килĕшекен пĕр хĕрача та тупăнман.

Пьесăра капитализмлă çĕршывсенче пурлăхлă çынсем çеç хисепре тăнине тата ылттăнпа тем те илме пулнине кăтартнă. Çав вăхăтрах пирĕн тăван Совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем производствăра паха ĕç тĕслĕхĕсем кăтартнипе малти ретре тăнине танлаштарса кăтартса панă.

«Неравный брак» комедире театрти вырăс труппин чи лайăх артисчĕсем выляççĕ. Зайчик рольне Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Праудин, Шпигельглэз рольне — Дуняк, Джеферсон, Майкла секретарĕн рольне — Козлов, Годес рольне — Осипов, Розăн, Годес хĕрĕн рольне — Григорова т. ыт. те выляççĕ.

Художникĕ — Б. А. Архангельский.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Редакци ад